Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 декабĕр 12 тунтикун 284(5097) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш ҫул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаҫачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. замеҫтителĕн—3—97, редакци ҫекретарĕн—4—40, парти пурнăҫ пайĕн—7—87, йалхуҫалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăс пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Асран кайми чаплă уйав

1937 ҫулти декабĕрĕн 12-мĕш кунĕ социалисăм строительствин историне пĕтĕм совет ĕҫҫыннисен савăнăҫлă та нихҫан асран кайми чаплă уйавĕ пулса кĕчĕ. Вăл кун Совет халăхĕ тĕнчери чи демократилĕ Конституци тăрăх — Сталинла Конституци тăрăх, влаҫăн аслă органне—ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйларĕ.

Тулли кăмăлпа савăнса хаваслăн иртерчĕҫ совет ĕҫҫыннисем чаплă суйлав кунне. Сталинла Конституцинче ҫырса ҫирĕплетнĕ аслă правасен тивлечĕпе совет халăхĕ коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн пĕр кăмăлпа сасăласа, пĕтĕм тĕнче умĕнче Ленин—Сталин партине, хамăрăн социалисăмлă тăван ҫĕршыва чĕререн йуратнине кăтартрĕ. Пĕтĕм тĕнче Совет Союзĕн хăватлă вăйне, Совет халăхĕн никам ҫĕнтерейми морал҆ĕ-политикăлă пĕрлĕхне курчĕ.

Капиталисăмлă ҫĕршывсенче халиччен пулнă тата хал҆хи буржуалă конституцисем пĕри те халăха чăн-чăн ирĕклĕх паман, памаҫҫĕ те. Капиталисăмлă ҫĕршывсенче демократилĕ суйлавсем ҫинчен каласу та пулма пултараймасть, мĕншĕн тесен, буржуази халăхран хăраса тăрать, суйлавсенче вăл суйлавҫăсен прависене пур майсемпе те хĕсет, халăх ирĕклĕхне айаккала пăрса хăварать.

Пирĕн социалисăмлă тăван ҫĕршывра иртнĕ ҫулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пулса иртнĕ суйлав—вăл „...чăннипех пирĕн рабочисен, пирĕн хресченсен, пирĕн интеллигенцин пĕтĕм халăх уйавĕ. Тĕнчере ҫавăн пек чăннипех ирĕклĕ, чăннипех демократилĕ суйлавсем нихҫан та пулман-ха, нихҫан та! Истори ун пек примера пĕлмест" (Сталин). ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавне пĕтĕм суйлавҫăсен хисепĕнчен 96.8 проценчĕ хутшăннă. Ку суйлав вăл — коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн чаплă ҫĕнтерĕвĕ, бол҆шевиксен партин триумфĕ пулчĕ.

Совет халăхĕ хăйĕн морал҆ĕ-политикăла пĕрлĕхне 1938 ҫулти ийунĕн 26-мĕшĕнче пулнă союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче тата тепĕр хут кăтартса пачĕ. Ҫак суйлавра Совет халăхĕ, ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн суйлавĕнчи пекех, пĕр кăмăлпа пысăк ҫĕкленӳпе союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ тăратнă кандидачĕсене пĕтĕмпех суйласа хăварчĕ.

Сталин йулташ Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавҫăсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче, 1937 ҫулти декабĕрĕн 11-мĕшĕнче, пирĕн депутатсем Ленин сăнарлă политикăлă деятельсем пулмали ҫинчен ҫапла каланă:

„Суйлавҫăсем, халăх хăйсен депутачĕсенчен ҫакна ыйтмала: депутатсем хăйсен задачисен ҫӳллĕшĕнче тăччăр, вĕсем хăйсен ĕҫĕнче политикăлă обывательсен картне анса ан ларччăр, вĕсем Ленин сăнарлă политикăлă деятельсен вырăнĕнче тăччăр, вĕсем Ленин пекех йар-уҫă та паллă деятельсем пулччăр, вĕсем Ленин пекех кĕрешӳре нимрен хăраман тата халăх тăшманĕсене ним хĕрхенмен ҫынсем пулччăр, вĕсем ĕҫ йăвăрланма пуҫласан, горизонтра мĕнле те пулин хăрушлăх паларса тухма пуҫласан кирек мĕнле хăраса ӳкесрен те, кирек мĕнле хăраса ӳкес пеккинчен те ирĕклĕ пулччăр, вĕсем кирек мĕнле хăраса ӳкес пеккинчен те Ленин пекех ирĕклĕ пулччăр, ыйтăва пысăк ыйтусене татса пана ҫĕрте пур йенлĕ ориентаци тата пĕтĕм пљуссемпе минуссене пур йенчен те учота илмеле ҫĕрте вĕсем, Ленин пекех, ăслă та васкамасăр тăвакансем пулччăр, вĕсем Ленин пекех тĕрĕс те тӳрĕ кăмăллă пулччăр, вĕсем хăйсен халăхне, ăна Ленин йуратнă пекех, йуратчăр".

Совет халăхĕн депутачĕсем социалисăм строительствин пур участкисенче те—промышлĕннăҫра, транспортра, йалхуҫалăхĕнче, Хĕрлĕ Ҫарпа Хĕрлĕ Флот ретĕнче, государствă аппарачĕсенче, наукă лабораторийĕсенче — Сталин каланă пек политикăлă деятельсем пулса ĕҫлеҫҫĕ. Акă, ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн депутачĕ Тамара Моисейĕва йулташ халĕ Улатăрти паровозсем йусакан савăтра цех начал҆никĕ пулса. РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ Остряков йулташ „Хĕрлĕ Туҫа" колхоз председателĕ пулса ĕҫлеҫҫĕ. ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутачĕ А. М. Краснов йулташ, колхоз председателĕ пулнăскер, халĕ Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиум председателĕн замеҫтителĕ пулса ĕҫлет.

Пирĕн депутатсем халăха йуратни вĕсем кулленхи ĕҫре халăхпа таччăн ҫыхăнса тăнинче, вĕсем халăх шухăшĕпе сăмахне итлеме пĕлнинче тата массăна вĕрентнипе пĕрлех массăран вĕренме хатĕр пулнинче курăнать. Сăмахран, Вăрнар суйлав округĕнчен суйланă пирĕн депутат Совет Союз Геройĕ П. И. Пумпур йулташ хăйĕн суйлавҫисемпе куллен ҫыхăну тытать, ҫыру-ҫырупа суйлавҫăсем патĕнче ĕҫлет.

Совет халăхĕн депутачĕ хăйĕн ĕҫĕсене туса пына чухне хăй социалисăмла обшчĕствăн политикăлă деятелĕ пулса тăнине йăланах асра тытмала, политикла обывател҆ картне анса ларассинчен сыхланса тăмала.

ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕ пулса иртнĕренпе тĕнчери лару-тăру тата ытларах йăвăрланчĕ, ҫивĕчленчĕ. „Демократилĕ" текен ҫĕршывсем хирĕҫ тăманнине кура, фашисла захватчиксем Европăра тата Азире империалисăмла ҫĕнĕ вăрҫă сарса ыраҫҫĕ. Германипе Итали фашисăмĕ виҫҫĕмĕш ҫул ĕнтĕ Испани халăхĕн йунне тăкать. Йапони иккĕмĕш ҫул Китайра вăрă-хурахла йунлă вăрҫă сарса ырать. Мӳнхĕнри намăсла килĕшӳ тăрăх демократилĕ Чехословаки республикине Германи фашисăмăн ҫăварне пăрахса пачĕҫ.

Йапони военшчини пирĕн тăван ҫĕршыва вăрҫа туртса кĕме хăтланса пăхрĕ. Анчах вăл Хасан кӳлли районĕнче совет хĕҫпăшалĕн вăйне тивĕҫлипе тутанчĕ. Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Ҫар Йапони йытăсамурайĕсене арпа-кĕрпе пек салатса тăкрĕ.

Совет ҫĕршывĕ иртнĕ ҫулталăк хушшинче коммунисăм ҫулĕпе гигантла утăмсемпе тата маларах кайрĕ.

Пирĕн коммунистсен парти Совет халăхне хăватлă ҫĕнĕ хĕҫпăшал—„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне" пачĕ. Ҫак хĕҫпăшала алла илсе епĕр, совет ҫĕршывĕн ĕҫҫыннисем, хамăрăн револ҆уцилĕ сыхлăха тата ҫӳлерех ҫĕклетпĕр, халăх тăшманĕсене—фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла агенчĕсене пĕтĕмпех тăрă шыва ҫине кăларса тĕпĕ-тымарĕпех пĕтеретпĕр.

Ленин—Сталин партийĕ тавра, халăхсен ҫулпуҫĕ Сталин йулташ тавра тачăрах пĕтĕҫсе Совет государствине малалла тĕреклетсе пырар, тăван ҫĕршывăн оборонă хăватне тата ытларах ҫирĕплетер, коммунисăмăн ҫĕнĕ ҫĕнтерĕвĕсемшĕн паттăрăн кĕрешер!

ССРС Верховнăй Советне суйлани ҫулталăк тултарнă йатпа

Совет Союзĕнчи ĕҫҫыннисем ССРС Верховнăй Советне суйлани пĕр ҫулталăк тултарнине производствăра пысăк ҫĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илеҫҫĕ.

** Декабĕрĕн 10-мĕш тĕлне Кийĕври паровозсем йусакан савăтра 200 стахановĕц хăйсен ҫулталăкри заданине пурнăҫа кĕртнĕ. Вакун ураписен цехĕнче Кухар йулташ йертсе пыракан ҫамрăксен смени 2155 мăшăр урапа йусаса кăларнă, унăн ҫулталăкри нормăпа 2100 мăшăр йусамала пулнă.

** Буденный йачĕпе тăракан нефть савăчĕн коллективĕ (Баку) нефтьпродукцисем туса кăларас ҫулталăк планне тултарнă. Туса кăларакан продукцисен хакне йӳнетсе савăт 900 пин тенке йахăн перекет илнĕ.

(ТАСС).

700-шер процент тултарать

Канашри вакунсем йусакан савăтра таварлă комбинатри стахановĕцсем Сталинла Конституци кунĕ умĕн тунă ӳсĕмсене ҫирĕплетсе, Сталинла ҫĕнĕ Конституци тăрăх ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлани ҫулталăк тултарнă куна производствăра ҫĕнĕ ӳсĕмсем тунипе кĕтсе илчĕҫ.

Краснобайĕв, Рассказчикăв, Асачăвă, Лашманăвă йулташсем кашни кунах хăйсен нормисене 200—428 процент тултарса ĕҫлеҫҫĕ. Паллă стахановĕц Чернов йулташ кулленхи нормăна 700 процент тултарать. Каскалакан цехри сменă маҫтăрĕ РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ Е. Антонăвă йулташ плана 2—3 хут иртерсе тултарать.

Д. Иванов.

Гитлĕрпа Геринг Данцига пымала

Данцигра тухакан „Дейли Геральд" хаҫат пĕлтернĕ тăрăх, ҫак уйăхăн иккĕмĕш ҫурринче Данцига Гитлĕрпа Геринг пырасса кĕтеҫҫĕ. Вырăнти влаҫсем фашиссен пуҫлăхĕсем пынă ҫĕре Данцига „кирлĕ мар елементсенчен" тасатма тытăннă.

(ТАСС).

Пĕтĕм Совет халăхĕн пĕрремĕш депутачĕ ИОСИФ ВИССАРИОНĂВИЧ СТАЛИН йулташ.

Францири депутатсен палатин чрезвычайнăй ҫеҫҫийĕ

Декабĕрĕн 8-мĕшĕнче Парижре депутатсен палатин чрезвычайнăй ҫеҫҫийĕ уҫăлнă. Ҫеҫҫи Даладйе правительствин пĕтĕмĕшлĕ политикине сӳтсе-йавать. Даладйе правительствин тулашри политики фашисла Германипе Итали правительствисен пуҫлăхĕсем требованийĕсене умĕнче хăравҫăн кайала чакса пынипе паллă пулса тăрать.

Даладйе правительствин ҫĕршыв ăшĕнче хăйĕнче тытса пыракан политики чрезвычайнăй декретсем кăларнипе паллă. Ку декретсем пĕтĕмпех ĕҫҫыннисене хирĕҫ пыраҫҫĕ: вĕсем ҫине пысăк налогсем хумала тăваҫҫĕ, рабочисен ĕҫ условийĕсене начарлатаҫҫĕ. Францири ĕҫҫыннисем нойабĕрĕн 30-мĕшĕнче пĕтĕмĕшлĕ забастовкă пуҫласа йарсан, правительствă рабочисене хыттăн хĕсĕрлеме тытăннă. Забастовкă тăвакан рабочисем ҫине газсем йама тытăннă, рабочисене предприйатисенчен массăлăн кăларса йама пуҫланă.

Франци правительствин пуҫлăхĕ Даладйе чрезвычайнăй ҫеҫҫи пухса, радикал-социалистсен партийĕ пулăшасса шаннă. Ку парти формал҆нă ҫаплах халăх фронтĕнче тăрать-ха.

Анчах та Даладйе пĕтĕм тĕнчери фашисăмпа каварлашнипе тата ҫĕршывра реакцилĕ ĕҫсем туса иртернипе тата Франци буржуазийĕн пĕтĕм реакцилĕ партисене те хăй йенне ҫавăрма пултарчĕ. Реакцилĕ партисен депутатсен палатинче хăйсен представителĕсем чылайах нумай. Даладйе „демократилĕ союз" текен парти председателне—Фландена та хăй йенне ҫавăрма пултарнă. Фланден, Гитлĕрăн Францири паллă агенчĕ, палатăра: епĕр Даладйе правительствишĕн сасăлатпăр, тенĕ.

Депутатсен палати виҫĕ кун хушши хĕрӳллĕн тавлашнă хыҫҫăн, декабĕрĕн 10-мĕшĕнче ҫĕрле Даладйе правительствине шанмала туса решени йышăннă. Ҫак решенишĕн 315 депутат майлă пулса, 241 депутат хирĕҫ пулса сасăланă, 54 депутат пачах сасăламан.

Правительствăна шанмала тăвассине хирĕҫ: коммунистсемпе социалистсем тата ытти партисен хăшпĕр членĕсем, вăл шутра, радикал-социалистсен пĕр пайĕ хирĕҫ сасăланă. Радикал-социалистсенчен тăракан депутатсенчен 1/3 пайĕ пачах сасăламан. (Ку партине Даладйе хăй йертсе пырать).

Палатăра сасăлани резул҆тачĕсем акă мĕн кăтартаҫҫĕ: Даладйе реакцилĕ буржуазипе Гитлĕр агенчĕсенчен тăракан депутатсем хушшинче хăйне вал҆ли тĕрек туса, Франци буржуазине килĕшӳллĕ пулас шутпа, халăх фронтне аркатса тăкма тăрăшать. Анчах халăх фронтне аркатса йарас вырăнне вăл хăйне хирĕҫ халăх массине тăратрĕ. Халăх фрончĕ ҫаплипех никам ҫĕмĕрейми вăй пулса йулать.

(ТАСС).

Итали хаҫачĕсенче Францине хирĕҫле кампани вăйланни

Итали хаҫачĕсенче Францине хирĕҫле кампани вăйлансах пырать. Итали хаҫачĕсем Франци влаҫĕсем Тунисра итал҆йанĕцсене „хĕсĕрленĕ" пек кăтартса ҫыраҫҫĕ, Италири нумай хуласенче Францине хирĕҫ демонстрацисем пулнине кăтартаҫҫĕ.

Францин Римри посол҆ствине тата провинцисенчи консул҆ствисене ҫарпа полицисем сыхласа тăраҫҫĕ. Итали пичечĕ Туниспа Корсикăра Францине майлă пулса иртекен патриотла манифестацисене — „провокацилĕ" ĕҫсем тесе йат парать. Ҫакăнпа пĕрлех хаҫатсем Франци правительствин пуҫлăхĕ Даладйе Туниспа Корсикăна кайса ҫӳреме шутлани питех те аван мар ĕҫсем патне илсе пыма пултарать, тесе хăратса ҫыраҫҫĕ.

(ТАСС).

КОРСИКА

(Справкă)

Йулашки вăхăтра Итали Франци аллинче тăракан Корсикăна „Итали империйĕ" ҫумне ҫыпăҫтарма уҫҫăнах требовани лартать.

Ҫак ыйту вăл Итали фашисăмĕн йут ҫĕршывсене тытса илес планĕнче чылайах пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Корсикă вăл — Вăтаҫĕр тинĕсĕн хĕвеланăҫ пайĕнчи утрав. Вăл Франци аллинче тăрать.

Корсикă утравĕн талкăшĕ 8.722 тăваткăл километр. Унта 3322.584 ҫын пурăнать.

Корсикă — економикă тĕлĕшĕнчен кайа йулнă йалхуҫалăхлă район. Кунти халăх туринчен ытла вылăх-чĕрлĕх ĕҫĕпе пурăнать. Промышлĕннăҫ сарăлманпа пĕрех. Ҫав вăхăтрах ҫĕр айĕнчи пуйанлăх (ҫĕркăмрăкĕ, шур тăхлан, пăхăр) чылайах нумай. Утрав ҫинчи тĕп хула—порт Айаччо, унта 24.000 ҫын пурăнать.

Корсикă Францин кăнтăрти ҫыранĕсенчен 170 километрта тăрать, Итали ҫыранĕсенчен (Тосканран) 80 километрта тăрать. Ана Итали аллинче тăракан Сардини утравĕнчен Бонифачо текен ансăр пролив кăна уйăрса тăрать.

Корсикă Итали аллине куҫсан Францине хирĕҫ вăрҫăпа тапăнас йенчен усăллă пулма пултарать. Ҫавăн пекех Корсикă Италишĕн чĕртавар ҫăлкуҫĕ те пулма пултарать.

(ТАСС).

Колхозниксене колхоз уставне ҫирĕппĕн пăхăнма вĕрентмеле

Ҫак иртнĕ кунсенче „Правда" хаҫатра ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ „Колхозсенче укҫалă тупăшсене валеҫесси ҫинчен" йышăннă постановленине пичетлесе кăларнă. Ку постановлени, вырăнсенчи органсемпе колхозсен ходатайствийĕсем тăрăх, йалхуҫалăх ертелĕн Примерлă уставĕн 12-мĕш статйинне чылай улшăнусем кĕртет. Колхозсенчи укҫалă тупăшсене валеҫме ҫирĕп те уҫă йĕрке тăвать. Вăл сăмах та ҫук, колхозсене организаципе хуҫалăх йенчен малалла тĕреклетсе пырас ĕҫре пысăк вырăн йышăнса тăрĕ, мĕншĕн тесен, унăн кашни йĕрки практикă ыйтнисене вырăнлă, унăн кашни йĕркинче партипе правительствă колхозсене—совет хресченĕсен ырă пурнăҫĕн никĕсне чечеклентерсе пырассишĕн тăрăшни курăнса тăрать.

Колхозсен укҫалă тупăшĕ ӳссе пынипе чăннипех пур тата питех те хĕпĕртеттерекен факт. Халех ĕнтĕ нумай колхозсем хăйсен укҫалă тупăшĕсене ҫĕршер пинĕн, мĕлйуншар тенкĕн шутлаҫҫĕ. Укҫалă тупăшсем ӳсесси уйрăмăнах кăҫал. Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ „Колхозсенче тупăшсене тĕрĕс мар валеҫни ҫинчен" йышăннă постановленипе пĕтĕм партипе совет организацисене колхозсен укҫа хуҫалăхĕ ҫине ытларах пăхма кирли ҫине кăтартса пана хыҫҫăн вăйланчĕ. Ҫак хуҫалăх ҫулран ҫул аслăланса пырать, ҫавăнпа та кунта лайăх йĕрке, тĕплĕ учот пулмала, укҫа ăҫта тата мĕн ĕҫе кайнине колхозниксем тĕплĕн пĕлсе тăни кирлĕ.

Ертел илекен укҫалă тупăшран ертел „чи малтан государствăна памали налогсене парса татать, страховкă укҫисене тӳлет тата укҫан илнĕ ссудăсене кайала тавăрса парать". Ҫапла ĕнтĕ, саккун, колхозсен государствă умĕнчи хăйсен обйазательствине тултарасси пирвайхи тата никам пăсмала мар заповĕд пулнине палăртать.

Малалла, ертел производствăн кулленхи ĕҫĕне вал҆ли расходсем тăвать, администраципе хуҫалăх расхучĕсене саплать, кул҆турă ĕҫĕсем вал҆ли укҫа уйăрса хурать, валеҫĕнмен фонда тултарать. Ҫак расходсем хыҫҫăн йулакан укҫана ертел пĕтĕмпех колхозниксене ĕҫкунĕсем тăрăх валеҫсе парать. Колхозра укҫалă тупăшсене ҫак йĕркепе валеҫмеле туни—колхоз производствин интересĕсене те, колхозниксен интересĕсене те пĕтĕмпех килĕшӳлĕ. Вăл ҫакăн пек пулнине валеҫĕнмен фонд мĕнле хушăнса пынинчен те лайăх курма пулать.

Паллă, йулашки вăхăтсене ҫитиччен, валеҫĕнмен фондсене хушăнтарса пыма пур колхозсемшĕн те ҫакăн пек йĕрке пулнă. Валеҫĕнмен фонда ертел хăйĕн укҫалă тупăшĕсенчен 10 процентран ытла мар уйăрса хунă. Халĕ ҫак йĕркене улăштарнă: тырпул тăвакан районсенчи валеҫĕнмен фонда хушăнтарса пыма ертел илекен укҫалă тупăшран 12 процентран кайа мар, 15 проц. ытла мар, техническии кул҆турăсемпе выл҆ăх-чĕрлĕх ĕрчетекен районсенче — 15 процентран кайа мар, 20 процентран ытла мар уйăрса хумала. Валеҫĕнмен фонда уйăрса хумали виҫесем тĕлĕшĕнчен мĕншĕн-ха тырпул тăвакан районсемпе выл҆ăх-чĕрлĕх ĕрчетекен районсем хушшинче ҫакăн пек уйрăмлăх туна? Ҫакă вăл производствăн уйрăмлăхĕсенчен килет. Тырпул тăвакан колхозсенче йалхуҫалăх ĕҫĕсене пуринчен ытла МТС машинĕсем тăваҫҫĕ. Ҫапла ĕнтĕ ку колхозсене гаражсем, маҫтерскойсем т. ыт. тума кирлех те мар. Тепĕр майлă тăрать ĕҫ выл҆ăх-чĕрлĕх ĕрчетекен колхозра. Кунта—фермăсем, выл҆ăх витисем, сысна витисем, выл҆ăхсене апат памали хуралтсем т. ыт. тумала. Паллах, выл҆ăх-чĕрлĕх ĕрчетекен колхозра производствăлă расхутсем тырпул тăвакан колхозринчен нумай ытла тухаҫҫĕ. Правительствăпа партин Тĕп Комитечĕ колхоз производствин ҫак ыйтăвĕсене хисепе илеҫҫĕ, колхозниксем ыйтнă пек тăваҫҫĕ. Колхоз хуҫалăхĕ мĕн чухлĕ тĕреклĕрех, колхозсен хуҫалăх вăйĕ мĕн чухлĕ пысăкрах, ҫавăн чухлĕ колхозниксен пурнăҫĕ пуйанрах пулать. Колхоз, ертел хуҫалăхĕ—ку вăл колхозниксен ырă пурнăҫĕн тĕп ҫăлкуҫĕ.

Кӳренмеле пулсан та, ак ҫакнашкал фактсем ҫаплах пĕтмен-ха: партипе советсен хăшпĕр организацисем, уйрăм руководительсем йалхуҫалăх ертелĕн Примерлă уставĕ мĕне пĕлтернине ăнланман. Сталин йулташ колхозăн обшчĕствăлă интересĕсемпе колхозниксен хăйсен интересĕсене тĕрĕс ҫыхăнтарса пыма кирли ҫинчен кăтартса панисене ăнланман. Вĕсем колхозниксене колхоз уставĕ тăрăх ĕҫлеме вĕрентсе пырас вырăнне, ҫак саккуна тӳсме ҫук пăсаҫҫĕ, устава пăсни ҫине тимсĕррĕн пăхаҫҫĕ.

Белоруҫҫинчи Березин районĕнчен пире ҫапла пĕлтереҫҫĕ: „Новое заборье" колхоз правлени колхозниксене пилĕк ҫуллăха ҫĕр участкине тара пана. Ҫав районрах „Искра" колхозра темиҫе колхозник хăйсем лаша усраҫҫĕ, чылай колхозниксен пахча ҫĕрĕ устав тăрăх кăтаранчен те пысăкрах. Виҫшер ĕне, икшер пăру тытакан колхозниксем те пур. „Искра" колхоз районра чи кайа йулса пыракан колхоз, унта тӳррех сăтăрла ĕҫсемпе сыхăнса тăракан хуҫасăрлăх пуҫпулнă: 4.5 гектар ҫинчен пуҫтарса илнĕ викă пĕтнĕ, пĕр тоннă таран сӳс ҫĕрсе кайнă, нимĕн витмесĕр ларакан клевĕр вăрлăхĕ ҫĕрет.

Могил҆ов облаҫĕнче те чылай колхозсенче хăшпĕр колхозниксем, устав хушмасть пулсан та, лашасем усраҫҫĕ, выл҆ăхсем те вĕсен устав кăтартнинчен ытларах. Быхăв районĕнче, ҫавăн пек, 23 колхозник лаша тытать, 252 колхозникăн икшер ĕне. Могил҆ов районĕнче 32 колхозник лаша тытать, 307 колхозникăн икшер ĕне.

Ҫакăнта илсе кăтартнă фактсем вĕсем уйрăм колхозсенче буржуалă туртăмсем палăрни ҫинчен калаҫҫĕ. Ҫакăн пек туртăмсене ҫĕмĕрсе тăкнă кулаксен йулашкисем йе тĕрексĕртерех, колхоз стройĕшĕн кирлĕ пек воспитани илеймен уйрăм колхозниксем колхоза сĕтĕрсе кĕртеҫҫĕ. Ăнланас пулать: устава пăсни вăл колхоза вăйсăрлатасси патне илсе пырать, колхозниксем хушшинче кăмăлсăрлăх кăларать. Устава пăсни ҫине тĕрĕс мар, бол҆шевикла мар, тимсĕррĕн пăхас практикăна татăклăн та хыттăн сивлес пулать.

Йалхуҫалăх ертел уставне пурнăҫа тĕрĕс кĕртесси вăл—колхозниксене ывăнма пĕлмесĕр социалисăмла вĕрентсе пырассине, буржуалă туртăмсем палăрнисене хирĕҫ кĕрешни, кахалсене, колхоз производствине пăсакансене хирĕҫ кĕрешни тăрăх вĕрентсе пырассине, колхозăн хуҫалăх вăйне тĕреклетессишĕн ырми-канми ĕҫлессине пĕлтерет. Ҫакăн пек тунипе кашни колхозник колхоз вăйне курса, пĕлсе тăтăр. Колхозниксен тупăшĕ колхозниксен пахча ҫĕрĕ, саккунсăр ӳсни тăрăх мар, ĕҫкунĕ ӳсни тăрăх ӳсмеле. Пахча ҫĕрĕ, колхозник хăй килĕнче тытакан выл҆ăх-чĕрлĕх вăл—хăйне пулăшса тăма ҫеҫ, тĕп хуҫалăх вăл колхозра, пĕрлешӳлĕ, социалисăмлă хуҫалăхра.

Практикăра вара хăшпĕр чухне, тавҫăрса илме пĕлмен руководительсем, колхозниксем сат-пахчи йе пахча-ҫарма ĕҫĕпе интересленнине кура, пахча ҫĕрне саккунран иртсе ӳстерме кăмăлтанах ирĕк параҫҫĕ, йе тата, ҫитменнине, государствă ĕмĕрлĕхе усă курма колхоза пана ҫĕре те тара параҫҫĕ. Ҫийĕнчех, бол҆шевиксене тивĕҫлĕ хастарлăхпа колхоз сачĕсем тума, колхоз пахчи-ҫармине аслăлатма тытăнас вырăнне вĕсем ҫакнашкал хăтланаҫҫĕ. Ҫакăн пек руководительсем вара, кайарахпа колхозниксем пĕрлешӳлĕ ĕҫ ҫине пит йуратсах пăхманни мĕнле сăлтавран килнине ăнланаймасăр алсене хăлаҫла тăраҫҫĕ.

Партин Тĕп Комитечĕпе Совет Правительстви йалхуҫалăх ертелĕн уставне пурнăҫа тĕрĕс кĕртмеле тума тăрăшни — партипе совет организацисене пурне те колхозсемпе ытларах ҫыхăнса тăрассине вăйлатма, колхозсенче пулса иртекен пур ĕҫсене те пĕлсе тăма, устава пăснисене татăклăн пĕтерме хушать. Колхозник-ударниксен иккĕмĕш сийĕсĕн комиссинче Сталин йулташ каланă:

„Епĕр сирĕнпе пĕрле саккунсем ҫыратпăр. Устав вăл—аслă саккун, йалта ҫĕнĕ обшчĕствă тумали тĕп саккун".

Паллах, пирĕн хамăрăн пĕтĕм вăйа, ҫак аслă саккуна пĕртте пăсмасăр пурнăҫа кĕртсе пымала тăвас ĕҫе хурас пулать, нумай мĕлйунлă колхоз хресченĕсене телейлĕ колхоз пурнăҫĕн Сталинла уставĕн пĕтĕм аслă вăйне пĕлсе ҫитмеле тăвас пулать.

(„Правда" умстатйи, декабĕрĕн 8-мĕш).

Хĕрлĕ Ҫар 21 ҫул тултарнă уйава хатĕрленни

Харькăв ҫар округĕнчи чаҫсенче Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Ҫарĕпе Тинĕс-Ҫар Флочĕн 21-ш уйавне хатĕрленме тытăннă.

Ҫак чаплă уйав йачĕпе округри К. Е. Ворошилăв йачĕпе тăракан Хĕрлĕ Ҫар ҫуртĕнче командвăйпа начал҆ствă составĕсем хушшинче стрелковăй ăмăрту пуҫланса кайнă. Ҫавăн пекех тата гранатă ывăтакансен, волейболиссен, штангиссен, ишекенсен ăмăртăвĕсем пуҫланаҫҫĕ. Харькăв — Ворошиловград — Сталинград маршрут тăрăх йĕлтĕрҫĕсен чупăвĕ пулса иртмеле.

Хĕрлĕ Ҫар ҫурчĕн аслă залĕсенче йубилей йачĕпе пысăк выставкă уҫăлать, вăл выставкă Хĕрлĕ Ҫарăн чаплă ҫитĕнĕвĕсене кăтартать.

(ТАСС).

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партин
ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакциленĕ **КĔСКЕ КУРС.** *ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.*

XII-мĕш сыпăкăн малали

3. Советсен VIII-мĕш сиесĕ. ССРС çĕнĕ Конституцине йышăнни.

1935 çулти февралĕнче Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕнчи Советсен VII-мĕш сиесĕ ССР Сойузĕн 1924 çулта йышăннă Конституцине улăштарасси çинчен решени йышăннă. ССРС Конституцине улăштарма кирли 1924 çултанпа, урăхла каласан, Совет Сойузĕн пĕрремĕш Конституцине йышăннăранпа пайавхи кунччен ССРС пурнăçĕнче пит пысăк улшăнусем пулнинчен тухса тăнă. Иртнĕ çулсем хушшинче ССР Сойузĕнче класлă вăйсен соотношенийĕ тĕппенех улшăннă: социалисăмла çĕнĕ индустри туса хунă, кулачĕствăна çапса аркатнă, колхозлă строй çĕнтернĕ, пĕтĕм халăх хуçалăхĕнче совет обшчĕствин никĕсĕ пулса тăракан производствă средствисен социалисăмлă харпăрлăхĕ çирĕпленнĕ. Социалисăм çĕнтерни суйлав системине малала демократизацилесси патне, пурне те тивĕç, пĕртан тата тӳрех суйламала правапа вăрттăн сасăласа суйласси патне кусма май пачĕ.

Йатарласа уйăрнă Конституци комиççийĕ — унăн председателĕ Сталин йулташ пулнă — ССРС çĕнĕ Конституцийĕн проектне туса хатĕрленĕ. Проекта пĕтĕм халăх сӳтсе-йавнă, сӳтсе-йавасси 5 уйăх çурă хушши пынă. Конституци проектне сӳтсе-йавма Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш сиесне тăратнă.

1936 çулти ноябĕрте Советсен VIII-мĕш сиесĕ пуханнă, унăн ССРС çĕнĕ Конституци проектне ырламала йе сирсе пăрахмала пулнă.

Советсен VIII-мĕш сиесĕнче çĕнĕ Конституци проекчĕ çинчен тунă докладĕнче Сталин йулташ Советсен çĕршывĕнче 1924 çулхи Конституцие йышăннăранпа пулнă тĕп улшăнусене каласа панă.

1924 çулти Конституцие нэп-ăн малтанхи тапхăрĕнче туса хатĕрленĕ. Унчухне Совет влаçĕ социалисăм аталаннипе йунашарах капиталисăма аталанма панă. Унчухне Совет влаçĕ икĕ системă — капиталисăмла тата социалисăмла системăсем — ăмăртнă чухне економикă облаçĕнче социалисăм капиталисăма çĕнтерессине организацилеме тата çĕнтермелех тума шутланă. Унчухне „кам — кама" ыйтăва татса хуман пулнă-ха. Кивĕ тата пуйан мар техникă çинче никĕсленсе тăракан промышленнăç вăрçăччен виçене те çитеймен. Йалхуçалăхĕ унчухне тата ытларах илемлĕ мар картинă пулса тăнă. Совхозсемпе колхозсем йединоличник хресчен хуçалăхĕсен вĕçĕ-хĕррисĕр океанĕнче уйрăм утравсем пек çеç пурăннă. Сăмах унчухне кулачĕствăна пĕтересси çинчен мар, ăна пӳлесси çинчен çеç пынă. Тавар çаврăнăшĕн облаçĕнче социалисăмла сектăр 50 процента йахăн çеç йышăнса тăнă.

1936 çулта ССРС урăхла картинă пулса тăнă. 1936 çул тĕлне ССРС економики пачах улшăннă. Ку вăхăт тĕлне капиталисăмла елементсене пĕтĕмпех пĕтернĕ пулнă, — халăх хуçалăхĕн пур облаçĕсенче те социалисăмла системă çĕнтернĕ. Социалисăмла хăватлă индустри вăрçăченхи продукцинчен çичĕ хут ирттернĕ тата частнăй промышленнăçа пĕтĕмпех хĕссе кăларнă. Йалхуçалăхĕнче тĕнчери чи шултра производствă, машинланă, çĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантарнă социалисăмла производствă — колхозсемпе совхозсен системи çĕнтернĕ. Кулачĕствăна 1936 çул тĕлне пĕтĕмпех, класĕпех пĕтернĕ, йединоличниксен сектăрĕ çĕршыв економикĕнче халь ĕнтĕ мĕн чухлĕ те пулин пысăк вырăн йышăнса тăман. Мĕнпур тавар çаврăнăшĕ государствăпа кооперацие аллине пуханса тăнă. Çынна çын експлуатацилеснине йаланлăхах пĕтернĕ. Халăх хуçалăхĕн пур отраçлисенче те çĕнĕ, социалисăмла стройăн хускалми никĕсĕ пулса тăракан производствă средствисен обшчĕствăлă, социалисăмла харпăрлăхĕ çирĕпленнĕ. Çĕнĕ, социалисăмла обшчĕствăра кризиссем, çуклăх, ĕçсĕрлĕх тата нимĕнсĕр тăрса йуласси йаланлăхах кусран çухалчĕç. Совет обшчĕствин пур членĕсене валь҄ли те пуйан та культурăлă пурăнма условисем пулса тăчĕç.

Çавна май, тенĕ Сталин йулташ хăйĕн докладĕнче, Совет Сойузĕнчи халăхăн класлă составĕ те улшăннă. Помешчиксен класне тата кивĕ шултра империалисла буржуазине граждан вăрçи тапхăрĕнчех пĕтернĕ. Социалисăмла строительствă çулĕсенче експлуататăрла елементсене пурне те — капиталиссене, купцасене, кулаксене, спекулянтсене пĕтернĕ. Пĕтернĕ експлуататăрла классен йулашкийĕсем çеç кăштах йулнă, вĕсене пĕтĕмпех пĕтересси — сывăх вăхăтри ыйту пулса тăрат҄.

ССРС ĕçсынниĕсем — рабочисем, хресченсем, интеллигенци — социалисăм строительствин çулĕсенче тарăнăн улшăнчĕç.

Рабочи клас капиталисăм вăхăтĕнче пулнă пек производствă средствисемсĕр тăратса хăварнă, експлуатаци тӳсекен клас пулма чарăнчĕ. Вăл капиталисăма пĕтерчĕ, капиталиссенчен производствă средствисене туртса илчĕ, вĕсене обшчĕствăлă харпăрлăх туса хучĕ. Вăл çак сăмахăн хăйĕн кивĕ пĕлтерĕшлĕ пек пролетариат пулма чарăнчĕ. ССРС пролетариачĕ, государствă влаçне тытса тăраканскер, пачах çĕнĕ клас пулса тăчĕ. Вăл експлуатацирен хăтарнă, капиталисла хуçалăх системине пĕтерчĕ тата производствă средствисен социалисăмла харпăрлăхне туса хунă рабочи клас пулса тăчĕ, урăхла каласан, етемлĕх историйĕ халиччен ун пеккине пĕлмен рабочи клас пулса тăчĕ.

ССР Сойузĕнчи хресченсен лару-тăравĕнче те унтан сахал мар тарăн улшăнусем пулнă. Ĕлĕкхи вăхăтра икĕ теçетке мĕлйун ытла сапаланчăк уйрăм хресчен хуçалăхĕсем, ваккисем те тата вăтаммисем те, хăйсен йат çĕрĕсем çинче пĕчченшерĕн чакаланнă. Вĕсем кайа йулнă техникăпа усă курнă, вĕсене помешчиксем, кулаксем, купцасем, спекулянтсем, ростовшиксем тата ыттисем те експлуатацилене. Халĕ ССР Сойузĕнче пачах çĕнĕ хресчен халăхĕ ӳссе çитĕнчĕ: текех ĕнтĕ хресченсене експлуатацилеме пултараканн помешчиксемпе кулаксем, купцасемпе ростовшиксем çук. Хресчен хуçалăхĕсен пит пысăк пайĕ колхозсене кĕнĕ, çав колхозсен никĕсĕнче производствă средствисен уйрăм харпăрлăхĕ мар, коллективлă ĕç никĕсĕ çинче ӳссе çитĕнни коллективлă харпăрлăх выртат҄. Ку вăл — кирек мĕнле експлуатацинчен те ирĕке кăларнă хресчен халăхĕн çĕнĕ сăнарĕ. Çакăн пек хресчен халăхне те халиччен етемлĕх историйĕ пĕлмен.

ССРС интеллигенцийĕ те улшăннă. Вăл — унăн масси — пачах çĕнĕ интеллигенци пулса тăчĕ. Вăл — унăн нумайрах пайĕ — рабочисемпе хресченсен хушшинчен тухнă. Вăл кивĕ интеллигенци пек капиталисăмшăн мар, социалисăмшăн ĕçлет. Интеллигенци социалисăмла обшчĕствăн пĕртан правалă членĕ пулса тăчĕ. Ку интеллигенци рабочисемпе тата хресченсемпе пĕрле çĕнĕ, социалисăмла обшчĕствă тăват҄. Ку вăл — халăхшăн ĕçлекен тата кирек мĕнле експлуатацинчен те хăтарнă çĕнĕ сăнарлă интеллигенци. Кун пек интеллигенцине халиччен етемлĕх историйĕ пĕлмен-ха.

Çапла вара, ССР Сойузĕнчи ĕçсыннисен хушшинчи класлă уйрăмлăхсем пĕтсе пыраççĕ, кивĕ класлă искл҄ючительнăç çухалса пырат҄. Рабочисемпе хресченсен тата интеллигенци хушшинчи економикăлă тата политикăлă хирĕçӳсем чакса пĕтсе пыраççĕ. Обшчĕствăн морал҄лĕ-политикăлă пĕрлĕхĕн никĕсĕ пулса тăчĕ.

ССР Сойузĕн пурнăçĕнчи çак тарăн улшăнусене, ССР Сойузĕнче социалисăм тунă çак татăклă çĕнтерӳсене ССРС çĕнĕ Конституцинче палăртса хунă.

Çак Конституци тăрăх совет обшчĕстви икĕ туслă классенчен — рабочисен тата хресченсен класĕсенчен тытăнса тăрат҄, вĕсен хушшинче класлă уйрăмлăхсем йулнă-ха. Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕ рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государстви пулса тăрат҄.

ССРС политикăлă никĕсĕ помешчиксемпе капиталиссен влаçне сирпĕтсе антарнипе тата пролетариат диктатури çĕнтерсе илнипе ӳссе çирĕпленнĕ ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсем пулса тăраççĕ.

ССР Сойузĕнче пĕтĕм влаç ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсен урлă хулари тата йалти ĕçсыннисен аллинче тăрат҄.

ССРС государствă влаçĕнчи аслă оргăнĕ ССРС Верховнăй Совечĕ пулса тăрат҄.

ССРС Верховнăй Совечĕ пĕртан правалă икĕ палатăран — Сойуз Советĕнчен тата Национал҄ностĕсен Советĕнчен тытăнса тăрат҄. Верховнăй Совета ССРС гражданĕсем пурне те тивĕç, тӳрех тата пĕртан суйлав правипе вăрттăн сасăласа тăватă çуллăха суйлаççĕ.

ССРС Верховнăй Совечĕн суйлавĕсем, ĕçсынни депутачĕсен ытти мĕн пур Совечĕсен суйлавĕсем пекех, пурне те тивĕç пулса тăраççĕ. Ку вăл ССР Сойузĕн 18 çул тултарнă пур гражданĕсен те, — мĕнле расă тата национал҄нăç пулнине, мĕнле тĕн тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, пĕр вырăнта пурăннипе пурăнманнине, мĕнле социаллă сийрен тухнине, пурлăхĕ мĕнлине тата ĕлĕк мĕн ĕçпе пурăннине пăхмасăр, — ăсран тухнисемсĕр тата судпа айăпласа суйлав прависĕр хăварнă çынсемсĕр пуçне, — депутатсен суйлавне хутшăнма та суйланма та пултарнине пĕлтерет.

Депутатсен суйлавĕ пĕр тан. Ку вăл кашни гражданинăн пĕр сасă пуррине тата гражданĕсем пурте суйлавра пĕртан тивĕçпе пулмаллине пĕлтерет.

Депутатсене тӳрех суйлаççĕ. Ку вăл ĕçсынни депутачĕсен пур Совечĕсене те, йал тата хула ĕçсыннисен депутачĕсен Совечĕсĕнчен пуçласа ССРС Верховнăй Советне çитиех, гражданĕсем никам урлă мар хăйсем суйламаллине пĕлтерет.

ССРС Верховнăй Совечĕ икĕ палатин пĕрлехи заседанийĕнче Верховнăй Совет Президиумне тата ССРС Халăх Комиссарĕсен Советне суйлат҄.

Совет Сойузĕн економикăла никĕсĕ социалисăмла хуçалăх системи тата производствă средствисен социалисăмла харпăрлăхĕ пулса тăрат҄. ССР Сойузĕнче социалисăм принципĕ: „Кашнинчен — унăн пултарулăхне кура, кашнине — унăн ĕçне кура" текен принцип пурнăçа кĕрсе пырат҄.

ССРС пур гражданĕсене те ĕçлев прави, канăç прави, вĕренӳ прави, ватăлсан, чирлесен, çавăн пекех, чирлесен тата ĕç пултарулăхне çухатсан материал҄нăй обеспечени илмели права панă.

Хĕрарăма пур ĕçре те арçынпа пĕртан права панă.

ССРС гражданĕсен пĕртанлăхĕ, вĕсен наципе расине пăхмасăр, никам пăсмала мар саккун пулса тăрат҄.

Пур гражданĕсен те совĕç ирĕклĕхĕ тата тĕне хирĕç пропагандă тумали ирĕклĕх пур.

Конституци — социалисăмла обшчĕствăна çирĕплетес интересшăн — сăмах, пичет, пухусемпе митингсен ирĕклĕхне, обшчĕствăлă организацисене пĕрлешмели правана, çынна никам тĕкĕнмеле марине, килçурта никам тĕкĕнмеле маррине тата çырусен вăрттăнлăхне, урăх çĕршыв гражданĕсене, вĕсем ĕçхалăх интересĕсемшĕн тăнăшăн, йе ăслăлăх тĕлĕшпе ĕçленĕшĕн, йе нацилĕ ирĕклĕхшĕн кĕрешнишĕн хĕсĕрлеве лекнисене, хӳтлĕх памали правана гарантилет.

Çĕнĕ Конституци çавăнпа пĕрлех ССРС пур гражданĕсем çине те пысăк обйазанноçсем хурат҄: вĕсен саккунсене пурнăçа кĕртмеле, ĕç дисциплинине пăхăнмала, обшчĕствăшăн тумали ĕçсене тӳррĕн туса пымала, социалисăмла пĕрлешӳлĕ пурнăç йĕркисене хисеплемеле, обшчĕствăлă социалисăмла харпăрлăха упраса çирĕплетмеле, социалисăмла тăван çĕршыва сыхламала.

„Тăван çĕршыва сыхласси ССРС кашни гражданинĕн хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрат҄".

Гражданĕсен тĕрлĕрен обшчĕствăсене пĕрлешмели прави çинчен каласа, Конституци хăйĕн стат҄йисенчен пĕринче çапла çырса хунă:

„Рабочи класăн тата ĕçсыннисен урăх сийĕсен ĕретĕнчи чи активлă тата чи ăнланулă гражданĕсем вара — Пĕтĕм Сойузри коммуниссен (большевиксен) партине пĕрлешеççĕ; вăл ĕçсыннисен социалисăм стройне тĕреклетсе малала ӳстерессишĕн пыракан кĕрешӳĕнче вĕсен малти отрйачĕ пулса тăрат҄, ĕçсыннисен мĕнпур организацийĕсене — обшчĕствăлисене те, государствăлисене те — йертсе пыракан чăмăрĕ пулса тăрат҄".

Советсен VIII-мĕш сиесĕ пĕр кăмăлла пулса ССРС çĕнĕ Конституцийĕн проектне ырласа çирĕплетрĕ.

Советсен çĕршывĕ, çапла вара, çĕнĕ Конституци, социалисăм тата рабочисемпе хресченсен демократи çĕнтерӳĕн Конституцине тунăнчĕ.

Çакăнпа Конституци пĕтĕм тĕнчипе историлĕ факта. ССРС çĕнĕ аталану тапхăрне кĕнине, социалисăмла обшчĕствă строительствине вĕçлесе çитерсе, майĕпен коммунисăмла обшчĕствăна куçса пымалли тапхăра кĕнине çирĕплетсе хучĕ, унта обшчĕствăлă пурнăçăн йертсе пыракан пуçламăшĕ çак коммунисла принцип пулмала: „Кашнинчен — унăн пултарулăхне кура, кашнине — ăна мĕн кирлине кура".

4. Бухаринла-троцкисла шпионсен, сăтăрçăсен, тăван çĕршыв изменникĕсен йулашкийĕсене пĕтерни. ССРС Верховнăй Совет суйлавне хатĕрленни. Парти ăшĕнчи демократине анлăн сарасси çине çул тытни. ССРС Верховнăй Совет суйлавĕсем.

1937-мĕш çул бухаринла-троцкисла бандăри извергсем çинчен çĕнĕ даннăйсем уçса кăтартса пачĕ. Пйатаков, Радек тата ыттисен ĕçĕ тăрăх пулнă суд процесĕ, Тухачевский, Йакир тата ыттисен ĕçĕ тăрăх пулнă суд процесĕ, йулашкинчен, Бухарин, Рыкăв, Крестинский, Розенгол҄ц тата ыттисен ĕçĕ тăрăх пулнă суд процесĕ, çак процессем пурте, бухаринĕçсемпе троцкиссем тахçанах халăх тăшманĕсен „сылтăмла-троцкисла блок" текен пĕрлешӳлĕ пĕр бандă пулса тăнине кăтартса пачĕç.

Суд процесĕсем çакна кăтартса пачĕç: етем йăхĕн çак ирсĕрлĕхĕсем халăх тăшманĕсемпе — Троцкипе, Зиновйĕвпа, Каменĕвпа пĕрле Октябĕрти социалисăмла революци малтанхи кунĕсенчех Ленина хирĕç, партине хирĕç, Совет государствине хирĕç пĕр загăвăрта тăнă. 1918 çулăн пуçламăшĕнче Брестри мире пĕтерсе лартма провокатăрла хăтланнисем; 1918 çулта çуркунне Ленина хирĕç загăвăр туни тата Ленина, Сталина, Свердлова арĕслесси тата вĕлересси çинчен „сулахай" есерсемпе каварлашни; 1918 çулта çулла Ленина тискеррĕн персе амантни; 1918 çулта çулла „сулахай" есерсем пăлхав туни; 1921 çулта Ленин руководствине шалтан хавшатса сирпĕтсе антарас тĕллев тытса партире йурийех хирĕçӳсем çивĕчлетсе йани; Ленин чирленĕ вăхăтра тата Ленин вилнĕ хыççăн парти руководствине сирпĕтсе антарма хăтланни; урăх çĕршыв разведкисене государствă вăрттăнлăхĕ çинчен пĕлтерсе тăни тата шпионла сведенисем парса тăни; Кирăва тискеррĕн вĕлерни; сăтăрла ĕçсем, диверсисем, взрывсем, Менжинскине, Куйбышĕва, Горькине тискеррĕн вĕлерни — çаксене тата ытти çакнашкал пĕтĕм тискер ĕçсене çирĕм çул хушши, урăх çĕршывсенчи буржуалă разведкăсен заданийĕсем тăрăх, Троцкий, Зиновйĕв, Каменĕв, Бухарин, Рыкăв тата вĕсен хӳринче пыракансем хутшăнса ĕçленипе йе йертсе пынипе туса пынă пулнă мĕн.

Суд процесĕсем çакна кăтартса пачĕç: троцкисла-бухаринла извергсем хăйсен хуçисем — урăх çĕршывсенчи буржуалă разведкăсем хушнине пурнăçласа хăйсен умне: партипе совет государствине çĕмĕрсе тăкас, çĕршыв оборонине хавшатас, урăх çĕршывсен вăрçăлă интервенцине çăмăллатас, Хĕрлĕ çар поражениие хатĕрлес, ССР Сойузне таткаласа пайлас, йапонĕçсене Совет Приморйине парас, пол҄аксене Совет Белоруççине парас, нимĕçсене Совет Украинине парас, рабочисемпе колхозниксем кĕрешсе илнисене пĕтерес, ССР Сойузĕнче капиталисăмла чуралăх йĕрки туса хурас тĕллев лартса ĕçленĕ.

Çак шургвардилĕ пигмейсем, — вĕсен вăйне ĕнтĕ пурĕ те пĕчĕк çеç кăпшанкă вăйĕ вырăнне кăна хума пулĕччĕ, — ахăртнех, култарма, хăйсене çĕршыв хуçисем вырăнне шутланă пулас, хăйсене чăнахах та Украинăна, Белоруççине, Приморйене айаккала валеçсе, сутса пĕтерме пултаракансем вырăнне хунă пулас.

Çак шургвардилĕ кăпшанкăсем Совет çĕршывĕн хуçи Совет халăхĕ пулса тăнине, господа рыкăвсем, бухаринсем, зиновйĕвсем, каменĕвсем пурĕ те государствă службинче вăхăтлăха тăракансем кăна иккенне, вĕсене государствă кирек хăш минутра та кирлĕ мар çӳпçап вырăнне хурса хăйĕн канцел҄арийĕсенчен кăларса ывăтма пултарнине маннă.

Фашиссен çак нимĕне тăман лакейĕсем çакна: Совет халăхĕ пӳрнине хускатни çеç кирлĕ, вара вĕсенчен йĕрĕ те йулас çуккине маннă.

Совет сучĕ бухаринла-троцкисла извергсене персе пăрахмала турĕ.

Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕ пригăвăра пурнăçа кĕртрĕ.

Совет халăхĕ бухаринла-троцкисла бандăна çĕмĕрсе тăкнине ырларĕ те черетлĕ ĕçсене тума пуçăнчĕ.

Черетри ĕçсем — ССРС Верховнăй Совет суйлавне хатĕрлесси тата ăна организованнă ирттересси пулнă.

Парти суйлава хатĕрленес ĕçе вăйлăн сарса йачĕ. Парти, ССРС çĕнĕ Конституцине ĕçе кĕртни çĕршывăн политикăлă пурнăçĕнче çаврăну пулнине пĕлтерет тесе шутланă. Парти, çак çаврăну вăл суйлав системине туллин демократизацилессинче, пӳлӳсем пулнă суйлавсенчен — пурне те тивĕç суйлавсене, пĕртанах мар суйлавсенчен — пĕртан суйлавсене, нумай сыпăклă суйлавсенчен — тӳррен суйлавсене, уççăн суйлавсенчен — хупă суйлавсене куçнинче пулат҄ тесе шутларĕ.

Çĕнĕ Конституцие ĕçе кĕртиччен култ служителĕсемшĕн, шургвардейĕç пулнисемшĕн, кулак пулнисемшĕн тата обшчĕствăшăн усăлă мар ĕçпе пурăнакансемшĕн суйлав правинче пӳлӳсем пулнă пулсан, çĕнĕ Конституци гражданĕсен çак категорийĕшĕн суйлав правинчи пӳлӳсене пăрахăça кăларат҄, депутатсене суйласси не пурне те тивĕç тăват҄.

Ку таранччен депутатсен суйлавĕсем пĕртанмар пулнă пулсан, — мĕншĕн тесен хулари тата йалти халăхшăн суйлав нормисем тĕрлĕ пулнă, — халĕ ĕнтĕ суйлавсен пĕртанлăхне пӳлсе тăма кирлĕ пулни пĕтрĕ, пур гражданĕсем те суйлавсене пĕртан правапа хутшăнма пултараççĕ.

Ку таранччен Совет влаçĕн вăтам тата аслă оргăнĕсене суйласси нумай сыпăклă пулнă пулсан, халĕ ĕнтĕ, çĕнĕ Конституци тăрăх, пур Советсене те, йалтисемпе хуларисенчен пуçласа Верховнăй Совет таранах, гражданĕсем тӳрĕ суйлавсем тăрăх тӳррĕмĕнех хăйсем суйлаççĕ.

Ку таранччен Советсене депутатсем суйласси уççăн тата спискăсем тăрăх сасăланипе пулнă пулсан, халĕ ĕнтĕ депутатсене суйланă чух сасăласси спискăсем тăрăх мар, суйлав округĕсем тăратнă уйрăм кандидатурăсем тăрăх вăрттăн пулмала.

Çакă вăл, паллах, çĕршывăн политикăлă пурнăçĕнчи çаврăну пулнă.

Çĕнĕ суйлав системи массăсен политикăла активлăхне вăйлатасси патне, Совет влаçĕн оргăнĕсем тĕлĕшĕнчен массăсен контрол҄не вăйлатасси патне, Совет влаçĕн оргăнĕсен халăх умĕнчи ответлăхне вăйлатасси патне илсе пымала пулнă, илсе пынă та.

Çакă çаврăнуна пур йенчен те хатĕр пулса кĕтсе илес тесен, партин çак çаврăну пуçне тăмала пулнă тата çитес суйлавсенче хăйĕн йертсе пырас рол҄не пурнăçа кĕртсе пымала пулнă. Анчах та, çакăн пек тума парти организацисен хăйсен практикăлă ĕçĕнче вĕçне çитиех демократилĕ пулни, вĕсем хăйсен партин шалти пурнăçĕнче демократилĕ централисăм никĕсĕсене парти уставĕ хушнă пек пĕтĕмпех туса пыни, партин пур оргăнĕсем те суйланă оргăнсем пулни, партире критикăпа самокритикă туллин аталанса пыни, парти организацисен ответлăхĕ парти масси умĕнче туллин пулни тата парти массине хăйне пĕтĕмпех активлантарса çитерни кирлĕ пулнă.

Тĕпкомăн 1937 çулти феврал҄ уйăхĕ вĕçĕнче пулса иртнĕ Пленумĕнче Жданăв йулташ парти организацисене ССРС Верховнăй Совет суйлавне хатĕрлес ыйту тăрăх тунă докладран çакă палăрнă: партин чылай организацисем хăйсен практикăлă ĕçĕнче чылай чухне парти уставне тата демократилĕ централисăм никĕсĕсене пăсаççĕ, суйлавсене — кооптаципе, уйрăм кандидатурăсем тăрăх сасăлассине — спискă тăрăх сасăланипе, хуппăн сасăлассине — уççăн сасăланипе улăштараççĕ тата ытти те. Паллах, çакнашкал организацисем çакнашкал практикăпа Верховнăй Совета суйланă чухне хăйсен задачне пурнăçлама пултарайман. Çавăнпа та, чи малтан, парти организацисен çавнашкал демократине хирĕçле практикине пĕтермеле тата парти ĕçне, сарса йанă демократи никĕсĕ çинче, урăхлатса çĕнетмеле пулнă.

Çакна май Тĕпком Пленумĕ, Жданăв йулташ докладне итленĕ хыççăн, çапла йышăннă:

„а) Парти ĕçне, парти уставĕ хушнă пек, партин шалти демократисăмĕн пуçламăшĕсене пĕр турткаланмасăр тата туллин пурнăçа кĕртнĕ никĕс çинче çĕнетсе тухмала.

б) Парткомитетсен членĕсене кооптаци йĕркипе лартас практикăна пĕтерес, парти уставне майлăн, парторганизацисен йертсе пыракан оргăнĕсене суйласа лартмали йĕркене тепĕр хут пуçласа йарас.

в) Парторгăнсене суйланă чухне спискăпа сасăлама чарас, — сасăласси уйрăм кандидатурăсем тăрăх пулмала, сасăланă чух парти членĕсен пурин те кандидатсене отвод пама тата вĕсене критиклеме нимĕнле пӳлмен права пулмала.

г) Парторгăнсене суйланă чухне хуппăн (вăрттăн) сасăламала тăвас.

д) Пур парторганизацисене те, пуçламĕш парторганизацисен парткомĕсенчен пуçласа, край, облаç комитечĕсем тата нацкомпартисен Тĕп комитечĕсем таранах, парторгăнсен суйлавне ирттерес, суйлавсене майăн 20-мĕшĕнчен кайа йулмасăр ирттермеле.

е) Пур парторганизацисене те парторгăнсен суйлав срукĕсене парти уставĕ каланă пек çирĕп тытса пыма хушас: пуçламĕш организацисенче — çулталăкра 1 хут, район тата хула организацисенче — çулталăкра 1 хут, облаç, край тата республикă организацисенче — $1^1/_2$ çулта 1 хут.

ж) Пуçламĕш парторганизацисенче парткомсене саватри пĕрлешӳлĕ пухусенче суйлас йĕркене çирĕппĕн пурнăçа кĕртмеле тăвас, саватри пĕрлешӳлĕ пухусем вырăнне конференцисем туни пулмала мар.

з) Чылай пуçламĕш парторганизацисенче пĕрлешӳлĕ пухусем вырăнне цехсенчи пухусем тата конференцисем ирттернипе пĕрлешӳлĕ пухусене фактически пăрахăça кăларнă практикăна пĕтерес".

Çапла пуçланса кайрĕ парти çитес суйлавсене хатĕрленесси.

Тĕпкомăн çак постановленийĕ пит пысăк политикăла вырăн йышăнса тăнă. Унăн пĕлтерĕшĕ, вăл ССРС Верховнăй Совет суйлавĕ тăрăх парти суйлав кампанине пуçласа йанинче кăна мар. Унăн пĕлтерĕшĕ, чи малтан çакăнта пулнă: вăл парти организацисен ĕçне урăхлатса çĕнелме, партин шалти демократи патне çул тытма тата Верховнăй Совет суйлавĕсене пур йенчен те тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илме пулăшрĕ.

Суйлав кампанине сарса пырса, парти хăйĕн суйлав политикинче коммуниссемпе партире тăманнисен суйлав блокĕн идейине тĕп вырăна хума йышăнчĕ. Парти суйлава партире тăманнисемпе блок туса, партире тăманнисемпе сойуз туса тухрĕ, суйлав округĕсем тăрăх партире тăманнисемпе пĕрле пĕрлехи кандидатсем тăратма йышăнчĕ. Ку вăл буржуалă çĕршывсенчи суйлав кампанисен практикинче нихçан курман тата пачах пулма та пултарайман йышши ĕç пулнă. Анчах та пирĕн çĕршывшăн коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ пĕтĕмпех пурнăçлă ĕç пулса тăчĕ, мĕншĕн тесен пирĕн çĕршывра текех тăшманла классем çук, халăхăн пур сийĕсен те морал҄лĕ-политикăлă пĕрлĕхĕ тавлашма çук факт пулса тăрат҄.

1937 çулти декабĕрĕн 7-мĕшĕнче парти Тĕпкомĕ пур суйлавçăсем патне те чĕнӳ кăларчĕ. Вăл чĕнӳре каланă:

„1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Совет Сойузĕнчи ĕçсыннисем хамăрăн Социалисăмлă Конституци тăрăх ССР Сойузĕн Верховнăй Советне депутатсем суйлаççĕ.

Малали 3-мĕш страницăра

МАЛАЛИ.

Болъшевиксен партийĕ суйлава партире тăман рабочисемпе, хресченсемпе, служăщчисемпе, интеллигенципе блок туса, сойуз туса тухаҫ. Болъшевиксен партийĕ партире тăманнисенчен уйрăлса тăмасҫ, йăлтах урăхла, вăл суйлава партире тăманнисемпе блок туса, сойуз туса тухаҫ, рабочисемпе служăщчисен професси̇лĕ сойузĕсемпе, комсомолпа, партире тăманнисен ытти организацисемпе тата обчĕствисемпе блок туса тухаҫ.

Çапла ĕнтĕ, депутата суйлама тăратнă кандидатсем коммунисемшĕн те, партире тăманнисемшĕн те пĕрех пулаççĕ, партире тăман кашни депутат, çавăн пекех тата, коммуниссен депутачĕ пулаҫ, тепĕр тĕрлĕ те—кашни коммунисла депутат — партире тăманнисен депутачĕ пулаҫ".

Тĕпком чĕнсе калани суйлавçăсене çапла чĕннипе вĕçленнĕ:

„Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) партийĕн Тĕп Комитечĕ мĕнпур коммуниссемпе сочувствуйушчисене партире тăман кандидатсемшĕн партире тăракан кандидатсемшĕн сасăланă пекех пĕр кăмăллă пулса сасăлама чĕнет.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) партийĕн Тĕп Комитечĕ партире тăман мĕнпур суйлавçăсене коммунис-кандидатсемшĕн вĕсем хăйсем партире тăман кандидатсемшĕн сасăланă пекех пĕр кăмăллă пулса сасăлама чĕнет.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) партийĕн Тĕп Комитечĕ мĕнпур суйлавçăсене 1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Сойуз Советне тата Нациоңалъноçсен Советне депутатсем суйлама пурте пĕр çын пек пулса суйлав урнисем патне тухма чĕнет.

Совет государствин аслă органне суйламали хисеплĕ правăпа усă курман суйлавçă пĕрре те пулмала мар.

Суйлавçăсене пурне те Верховнăй Совет суйлавне хутшăнтарасси хăйĕн граждăнла тивĕçĕ мар тесе шутлакан пĕр активлă гражданин та пулмала мар.

1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕ—ССР Сойузĕнчи мĕнпур ĕççыннисен Ленинăн — Сталинăн çĕнтерÿлĕ йалавĕ тавра пĕрлешмели аслă уйав кунĕ пулса тăмала".

1937 çулти декабĕрĕн 11-мĕшĕнче, суйлав умĕн, Сталин йулташ хăйĕн суйлав округĕнче сăмах тухса каланă, унта вăл халăх суйланă çынсем, ССРС Верховнăй Совет депутачĕсем мĕнле дейателсем пулмали çинчен ыйту хускатса; çапла каланă:

„Суйлавçăсем, халăх хăйсен депутачĕсенчен çакна ыйтмала: депутатсем хăйсен задачисен çÿллĕшĕнче тăччăр, вĕсем хăйсен ĕçĕнче политикăлă обывателсен картне анса ан ларччăр, вĕсем Ленин сăнарлă политикăлă дейателсен вырăнĕнче тăччăр, вĕсем Ленин пекех йар-уçă та паллă дейателсем пулччăр, вĕсем Ленин пекех кĕрешÿре нимрен хăраман тата халăх тăшманĕсене нимĕн хĕрхенмен çынсем пулччăр, вĕсем ĕç йăвăрланма пуçласан, тавракурăмра мĕнле те пулин хăрушлăх палăрса тухма пуçласан кирек мĕнле хăраса ÿкесрен те, кирек мĕнле хăраса ÿкес пеккинчен те Ленин пекех ирĕклĕ пулччăр, пысăк ыйтусене татса панă çĕрте пур йенлĕ ориентаци тата пĕтĕм плюссемпе минуссене пур йенчен те учота илмеле çĕрте вĕсем, Ленин пекех, аслă та васкамасăр тăвакансем пулччăр, вĕсем Ленин пекех тĕрĕс те тÿрĕ кăмăллă пулччăр, вĕсем хăйсен халăхне,ăна Ленин йуратнă пекех, йуратчăр".

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ССРС Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем пулса иртрĕç. Суйлавсем питĕ пысăк çĕкленÿпе иртрĕç. Ку вăл простă суйлав çеç мар, тата аслă уйав, Совет халăхĕн савăнăçĕ, ССРС халăхĕсен аслă туслăхĕн демонстрацийĕ пулчĕ.

94 мĕлйун суйлавçăсенчен суйлава 91 мĕлйун ытла суйлавçă хутшăннă, урăхла каласан, 96,8 процент. Вĕсенчен коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕшĕн 89 мĕлйун та 844 пин çын сасăланă, урăхла каласан, 98,6 процент. Коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсене хирĕç пурĕ те 632 пин çын çеç сасăланă, урăхла каласан, пĕр процентран та кайарах. Коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем пĕри йулмиччен пурте суйланнă.

Çапла ĕнтĕ, 90 мĕлйун çын пурте пĕр кăмăллă пулса сасăланипе ССР Сойузĕнче социалисăм çĕнтернине çирĕплетрĕ;.

Çакă вăл коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн чаплă çĕнтерĕвĕ пулнă.

Çакă вăл болъшевиксен партийĕн триумфĕ пулнă.

Молатăв йулташ Октябĕр революцийĕн 20-мĕш уйавĕ умĕн хăйĕн историлĕ сăмахĕнче Совет халăхĕн моралълĕ-политикăлă пĕрлĕхĕ çинчен каланисем тата тепĕр хут чаплăн çирĕпленчĕç.

(„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ" йулашки „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн çитес номĕрĕнче пичетленет).

Парти пурнăçĕ

Парти ретне ÿстересси—парторганизацисен хисеплĕ задачĕ

Районри отчотпа суйлав пухăвĕ хыççăн ПСК)б)П Йетĕрне райкомĕ тата районри чылай пуçламĕш парторганизацисем партине илес ĕçе лайăхлатни палăраҫ. 1938 çулта районри парторганизаци 54 çынна партине илнĕ, 11 çынна кандидатран члена куçарнă. Кунсăр пуçне тата 28 çынна сочувствуйушчисен группине илнĕ. Районра пĕр пуçламĕш парторганизаци çĕнĕрен хутшăннă. Тăватă çĕрте парти членĕсемпе кандидатсен группинчен пуçламĕш парторганизацисем тунă. Çакă вăл районри парторганизаци йулашки вăхăтра, уйрăмах ССРС, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра партире тăман активпа ĕçлессине лайăхлатни çинчĕн калаҫ.

Стрелецки колхозĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче отчотпа суйлав пухăвĕ хыççăн тăватă çынна партине илнĕ, пĕр çынна кандидатран члена куçарнă. Спирт савăтĕнчи парторганизаци икĕ çынна партине, тăватă çынна сочувствуйушчисен ретне илнĕ.

Анчах партине илес ĕçре çитменлĕхсем чылайах-ха. Парти речĕ нимрен ытла 4-мĕш категори шучĕпе ÿсет. Виççĕмĕш категорипе икĕ çул хушшинче те 38 çынна çеç парти ретне илнĕ. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш категорипе 5 çынна кăна партине илнĕ. Районра спирт савăчĕ, çу савăчĕ тата ытти предприйатисем пур. Ку предприйатисенче Ленин—Сталин партийĕ çĕршĕн кĕрешме пултарнине кăтартнă çынсем темĕн чухлĕ. Анчах кунта çав активпа ĕçлемеççĕ. Суйлав вăхăтĕнче хăйсен активлăхне кăтартнă агитаторсем, доверенăйсем çинчен чылай парторганизацисенче манса кайнă.

ПСК(б)П Чăваш организацин облаçри XIX-мĕш конференцийĕ парторганизацисене ПСК(б)П Тĕпкомĕ кăтартса панисем тăрăх ĕçлесе, партине илес ĕçри пур çитменлĕхсене те пĕтерме хушнине чылай пуçламĕш парторганизацисем пурнăçа кĕртмеççĕ. Партине йе сочувствуйушчине кĕме ыйтса панă зайавленисене уйăхĕ-уйăхĕпе пăхса тухмасăр выртараççĕ. Йатманăв йулташ (Шамат йалĕнчен) 1937 çулти йанварĕн 7-мĕшĕнче партине кĕме ыйтса пуçламĕш парторганизацине зайавлени панă. Пуçламĕш парторганизацинче ку зайавленийе 8 уйăх хушши тытса тăнă хыççăн, 1937 çулти çентаберĕн 1-мĕшĕнче пухура Йатманăв йулташа партине илнĕ. Анчах документсене йĕркелесе çитереймен парки ПСК(б)П райкомĕ пĕтĕм материалсене пуçламĕш парторганизацине кайала тавăрса панă. Ку ĕç пуçламĕш парторганизацинче каллех тепĕр 7 уйăх хушши выртнă хыççăн, 1938 çулти апрелĕн 30-мĕшĕнче хăйсен решенине иккĕмĕш хут пăхса тухнă. Кун хыççăн ĕç райкомра тепĕр 2 уйăх ытла выртнă. 1938 çулти июлĕн 20-мĕшĕнче тин ПСК(б)П райкомĕ Йатманăв йулташа партийе илмелетунине çирĕплетнĕ. Кун пек фактсем пĕрре çеç мар.

Акă спирт савăтĕнче ĕçлекен Николайĕв йулташ апрел уйăхĕнчех сочувствуйушчисен группине кĕме ыйтса зайавлени панă. Ку зайавленине пайан кунччен пухура пăхса тухман-ха.

Партине кĕрес текенсенчен чылайĕшĕ рекомендацисем тупаймасçĕ. Парторганизацисем те вĕсене рекомендацисем тупма пулăшмасçĕ. Хăшпĕр коммуниссем çынсене лайăх пĕлсе тăнă çĕртех рекомендаци памасăр тăраççĕ. Мĕншĕн сирĕн парторганизаци ÿсмест?—тесе ыйтсан: Чаканар йалĕнче партийе илмели çынсем çук, тет Матвейĕв коммунис (йалсовет председателĕ). Районри прокурор Миславский йулташ та çавăн пекех, судпа прокуратурă аппаратĕнче ĕçлекенсенчен партине кĕме йурăхлă çынсем çук, тесе калама та хăйаҫ. Ку çынсем никама та рекомендаци паман.

Районра парти резерви пысăк. Комсомол организацинче кăна икĕ пин çын ытла. Кунсăр пуçне тата 57 сочувствуйушчи. Çак парти резервисемпе ПСК(б)П райкомĕ те, пуçламĕш парторганизацисем те кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Чылай çĕрте партине йе сочувствуйушчисене илнипех лăпланаççĕ, вĕсене парти ĕçне хутшăнтармаççĕ, вĕренме пулăшмаççĕ. Райĕçтăвком çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче икĕ сочувствуйушчи шутланаҫ. Скворцов парторг вĕсен хушамачĕсене те пĕлмест. Ойкасри пуçламĕш парторганизаци парторгĕ Степанăв йулташ та çавăн пекех сочувствуйушчисене пĕлмест. Кунта та икĕ сочувствуйушчи çеç. Çавăнпа та ĕнтĕ хăшпĕрисем виç-тăват çул хушши сочувствуйушчисен ретĕнче тăраççĕ. ПСК(б)П райкомĕ 1938 çулта сочувствуйушчисене икĕ хут çеç пухса каласнă. Партине çĕнĕрен илнĕ членсемпе ĕçлесси те çавăн пекех çителĕксĕр.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ парти ретне ÿстерес тĕлĕшпе 1938 çулти мартăн 4-мĕшĕнче уйрăм постановлени йышăннă. Парторганизацисен умĕнче тăракан задачă — вăл ПСК(б)П Тĕпкомĕн кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртесси пулаҫ. Парторганизацисен чи малтан партине кĕме ыйтса панă зайавленисене пăхса тухас ĕçри волокитăна пĕтермеле. Пуçламĕш парторганизацинче парти ÿсĕмĕ мĕнле пыни çинчен райком ларăвĕсенче парторгсен отчочĕсене итлени кирлĕ. Партине кĕме рекомендаци парасси коммунисăн хисеплĕ обйазанăçĕ пулни çинчен кашни коммунисах ăнлантарса памала.

П. Ахтамăв.

ПСК(б)П Обкомĕн инструкторĕ.

Йалхуçалăх машинĕсене вăхăтра йусамала

Вăйлă тырпул туса илес çĕрте йалхуçалăх машинĕсене: трактăрсене, комбайнсене, çейăлкăсемпе плугсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа йусани пысăк вырăн йышăнса тăраҫ. Трактăрсен паркне вăхăтра йусани çураки ăнăçлăхне татса параҫ. Анчах, пирĕн республикăра трактăрсемпе ытти машинăсене йусас ĕç çаплах начар пыраҫ-ха. Кăна МТС тата МТМ директăрĕсен, вĕсен заместителĕсен, аслă механиксен декабĕрĕн 9-мĕшĕнче, Шупашкарта пулса иртнĕ канашлăвĕ те уççăн кăтартса пачĕ.

Машинă-трактăрлă маçтерскойсем хăйсен ĕçĕсене çаплах йĕркелесе, кирлĕ пек ĕçлесе пыраймасçĕ. Уйрăмах, Канашри МТМ начар ĕçленине палăртмала. Трактăрсене йусама запаслă пайсене вăхăтра хатĕрлемен пирки ку ĕç ытла та вăрахăн пыраҫ. Кунпа пĕрлех МТС-сем хăйсен трактăрĕсене йусама вăхăтра илсе пыманни те чылай чăрмантараҫ. Акă, Елĕкри МТС 15 трактăр илсе пырас вырăнне 3 трактăр, Куславккари МТС 15 вырăнне 6 çеç илсе пынă.

Канашри МТМ тăваттăмĕш квартăлта трактăрсене йусамали плана 50 процент анчах тултарнă. Çакăн пек кайа йулса пыни трактăрсене йусакансем хушшинче социалисăмлă ăмăртăва пуçарса пыманнинчен, вĕсене ĕçлеме кирлĕ условисем туса паманнинчен те нумай килнĕ.

Çĕрпÿри машинă-трактăрлă маçтерской çине те пысăк ответлăх хунă. Ку маçтерскойăн 4 районри МТС-сенчи трактăрсене йусамала. Анчах, ку вăхăтченех трактăрсене йусассине начар йĕркеленĕ. МТМ çумне çирĕплетнĕ Ишлей, Тутаркас тата Сĕнтĕрвăрри МТС-сем трактăрсене йусама вăхăтра леçсе паман пирки ку ĕç чаранса тăраҫ. Трактăрсене йусамали тăваттăмĕш квартăл планне мĕн пурĕ те 8,3 процент анчах тултарнă. МТМ-не кирлĕ пек йĕркелесе çитермен: унта таса мар, шыв пулмасҫ.

Машинă-трактăрлă станцисем трактăрсене хăйсен маçтерскойĕнче йусассишĕн васкани çук. Вармар МТС директăрĕ Григорйĕв йулташ пĕлтернĕ тăрăх, 10 трактăр йусанă. Вĕсене йусани çинчен акт çырса та çирĕплетнĕ. Анчах, çав трактăрсемпе пĕринпе те ĕçлеме май килмест, мĕншĕн тесен вĕсен уйрăм пайĕсем çитмеççĕ. Паллах, çакнашкал йусани ĕç мар, харпăрхăйне улталани çеç пулаҫ.

Патăрйел МТСтанцин тăваттăмĕш квартăлта 23 трактăр йусамала пулнă пулсан, 4 трактăр çеç, Парачкав МТС 4 трактăр анчах йусанă. Ытти машинă-трактăрлă станцисемпе танлаштарсан Кувакинăри МТС малта пыраҫ пек. Анчах, кунта та трактăрсене йусамали квартăл планне тултарман. 23 трактăр йусас вырăнне 13 трактăр çеç йусанă.

Чылай МТС тата МТМ директăрĕсем трактăрсене йусас ĕç вăрахăн пынине запаслă пайсем çуккипе ăнлантарма пăхаççĕ. Вĕсем „Автотракторосдеталь" тата йалхуçалăх снабженин республикăри кантурĕсене вăрçаççĕ, кусем вара запаслă пайсене вăхăтра йарса паманнишĕн пăшăрханаççĕ. Çапла вара трактăрсене йусас чи хаклă вăхăта усăсăр иртереççĕ. Запаслă пайсене вăхăтра шыраса тупассишĕн нихăшĕ те тăрăшмаççĕ.

Çакăн пек ĕçлени чылай çĕрте вырăнти ресурссемпе кирлĕ пек усă курманнинчен килет. Пĕр МТС-че пĕр йышчи пайсем ытлашшипех, тепринче вăл пайсем çук, ытти пайсем ытлашшипех.

Трактăрсене йусас тĕлĕшпе Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тата унăн машинăсен пайĕ куллен йертсе, пулăшса пыни çук. Нихăш МТМ-че те, нихăш МТС-че те ăмăртса, стаханăвла ĕçлессине пуçарса пымаççĕ.

Трактăрсене йусакан рабочисемпе трактăриссен хушшинче трактăрсене правителствă кăтартса панă срукра пысăк пахалăхпа йусаса пĕтерессишĕн стаханăвла йухăма анлăн сарса пымала. Вĕсене ĕçлеме лайăх условисем туса памала. Районсенчи партипе совет тата çĕрĕç организацисен трактăрсене йусас ĕçе йертсе, çитменлĕхсене пĕтерсе пымала.

Гр. Калинин.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн

Тури Йунтапари (Канаш р.) „Канаш" колхоз çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве тивĕçлипе пуçарса пыраҫ. Кашни бригадăрах çитес çуракине хĕрсех хатĕрленеççĕ. Çуракинче акма чи паха суртлă вăрлăхсем хатĕрлеççĕ. Колхозра трийерпа вăрлăхсене тасатма график тунă. Çав график тăрăх, трийера пĕр сехет те пушă лартмасăр, кунĕн-çĕрĕн вăрлăхсене тасатаççĕ.

Çитес çулхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе А. Семенăв колхозник йертсе пыракан пĕрремĕш бригадă аван ĕçленине палăртса хăвармала. Ку бригадă çĕре çемçетмеле вырăнти йапаласене хатĕрлеме тытăннă. Уйа 300 лав çĕрĕк тăпри кăларнă. Йалхуçалăх машинисене те йусаса хунă. Халъ пĕрремĕш бригадăра уйра йур тытса хăварма хатĕрленеççĕ.

В. Константинăв.

В. ПАВЛĂВ

Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн çĕнтерĕвĕ

1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕш кунĕ пирĕн çĕршывăн историне совет халăхĕн аслă çĕнтерÿ кунĕ пулса кĕчĕ. Çултаăк кайала нумай нацилĕ совет халăхĕ Сталинла Конституцире кăтартса панă пурне те тивĕç, пĕртан тата тÿрех суйламала правапа вăрттăн сасăласа ССРС Верховнăй Советне суйларĕ. Совет влаçĕн малтанхи 20 çулхи итогĕсене туса тухнă чухне Молатăв йулташ совет халăхĕн моралълĕ-политикăлă пĕрлĕхĕ çинчен калани тĕрĕс пулнине 1937 çулти декбĕрĕн 12-мĕшĕнче чаплăн ĕнентерсе панă. Çав кун 90 мĕлйун совет граждăнĕсем хăйсен сасĕсене коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн пачĕç. Пĕтĕм совет халăхĕ болъшевиксен мухтавлă партийĕшĕн, совет правителстви политикишĕн пĕр шухăшлă пулса сасăларĕ. ССРС Верховнăй Совечĕн суйлавĕсенче Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) Партийĕшĕн чăннипех те пĕтĕм халăх тăчĕ. Çак вăл болъшевиксен партин триумфĕ пулчĕ.

ССР Сойузĕнчи ĕççыннисен суйлав активлăхĕ йаланах пысăк пулнă. Анчах та 1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕш кунĕнче совет халăхĕн суйлав активлăхĕ нихçанхи пек те мар пысăк пулчĕ, ун пек активлăха тĕнчере пĕр çĕршыв та пĕлмест-ха.

Суйлав правипе усă куракан 94,1 мĕлйун çынран суйлавсене 91,1 мĕлйун çын пынă, урăхла каласан, вăл 96,8 процент пулаҫ. Çавăн пек ĕнтĕ социалисăмлă демократисăма пурнăçа кĕртнин чаплă итогĕ, вăл демократисăм пĕтĕм халăха демократилĕ правасемпе тата ирĕклĕхсемпе ĕçре усă курма май туса параҫ.

В. И. Ленин 1919 çултах ĕнтĕ буржуалă демократипе пролетариат диктатури çинчен калакан хăйĕн тезисĕсенче çапла кăтартса панă: пролетариат диктатури демократин формисемпе учрежденийĕсене пурпĕрех улăштараҫ, „çавăн пек улăштарни вăл капиталисăм пусмăрĕнче пурăннисем, йенчен, ĕççынни класĕсем йенчен демократисăмпа ĕçре усă курассине халиччен тĕнче курманла сараҫ". ССРС Верховнăй Совечĕн суйлавĕсем В. И. Ленинăн çак сăмахĕсене пĕтĕмĕшпех çирĕплетрĕç.

Тĕнче халиччен курман социалисăмлă демократисăм ырлăхĕсемпе усă куракан совет халăхĕн суйлав активлăхĕ çав тери пысăк пулнине тивĕçлипе хаклас тесен, буржуалă суйлав практикинчи фактсем çинчен аса илтерес пулаҫ. Йапонире 1937 çулта пулса иртнĕ парламент суйлавĕсене суйлавçăсенчен 69 9 процентчĕ, Англире (1935 ç.)—71,9 процентчĕ çеç хутшăннă т. ыт.

Анчах та çак цифрăсем те буржуалă „демократисăма" пÿлсе пынине тата вăл йачĕшĕн çеç шутланнине пĕтĕмпех çутатса параймаççĕ-ха. Çакна та манма кирлĕ мар: капиталисăмлă çĕршывсенче суйлав правипе тĕрĕссипе илсен халăхăн сахалрах пайĕ çеç усă кураҫ. Çапла, сăмахран, Йапонире суйлавсене хутшăнас правапа халăхăн 21 процентчĕ, Францире—28,2 проц., Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче—42,8 проц. çеç усă кураççĕ т. ыт.

Ĕççыннисен, урăхла каласан, халăхăн чи пысăк пайĕн суйлав правине кунта тĕрлĕрен чейе майсемпе пÿлсе пĕтерсе лартнă.

Буржуалă законодателства суйлавçăсем валъли тĕрлĕрен цензсем туни (пурлăх, çул шучĕ, вĕренни, пĕр вырăнта пурăнни т. ыт. те, т. ыт. те) чăннипе илсен пурне те тивĕç суйлав правине ултавлă йапала туса хураҫ. Нумайĕш капиталисăмлă çĕршывсенче суйлавсене ĕçлемели кунсенче иртермеле тăваççĕ, çак вăл ĕççыннисене суйлавсене хутшăнма май памасҫ.

Фашисла çĕршывсенче—Германире, Италире—парламет суйлавĕсене пĕтĕмпех пăрахăçа кăларнă. Фашисла пуçлăхсем ахалъ те пĕчĕклетсе хăварнă фиктивлă „демократине" те ытлашши йапала тесе шутлаççĕ: вĕсем парламента „депутатсене" хăйсем тĕллесе лартаççĕ.

Болъшевикла парти Сталинла Конституци тăрăх пулнă пĕрремĕш суйлавсене партире тăманнисемпе блок туса, сойуз туса тухрĕ.

Коммуниссемпе партире тăманнисен суйлав блокĕн сталинла идейине кашни совет гражданинĕн асне йулнă хумхануллă, историлĕ документра—Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) Партин Тĕп Комитечĕ мĕнпур суйлавçăсене чĕнсе каланинче каласа панă.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн çак историлĕ чĕнсе калани Сталин йулташăн, партипе правителствă руководителĕсен суйлав умĕн тухса каланă сăмахĕсемпе пĕрле коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн суйлав платформи пулса тăчĕ.

ССР Сойузĕнче 1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пулса иртнĕ суйлавсен итогĕсем совет халăхĕн аслăран та аслă çирĕплĕхне, коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн вăйĕ никам çĕмĕрейми хăватлине ĕнентерсе параççĕ. Сасăланă çĕре хутшăннисен пĕтĕм хисепĕнчен 98,6 процентчĕ блок кандидачĕсемшĕн сасăларĕ.

1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнчи суйлавсем ССР Сойузĕнчи халăхсем хăйсен çулпуçне Сталин йулташа, Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (болъшевиксен) Партине, Совет Правителствине вĕçĕмсĕр шанса йуратса тăнине йар уççăн та хăватлăн демонстрацилесе пачĕç.

Капиталисăм çĕршывĕсенче, суйлав вăхăтĕнче тĕрлĕрен чейеленнисене тата тÿррĕмĕнех улталанине пăхмасăрах, буржуалă правителствăлă партисем валъли суйлав тĕлĕшпе чи лайăх условисем туса панине пăхмасăрах, вăл партисем халăхăн сахалтарахĕшĕнчен çеç сасăсем пухма пултараççĕ.

Америкăри Перлешÿлĕ Штатсенче, сăмахран, 1936 çулта президент суйлавĕсенче пуçпулса тăракан партишĕн 128 мĕлйун халăхран 27 мĕлйун çын ытларах çеç сасăланă; 69 мĕлйун халăхлă Йапонире 1937 çулти парламент суйлавĕсенче пуçпулса тăракан партишĕн мĕн пурĕ те 7 мĕлйун çын çеç сасăланă т. ыт.

ССР Сойузĕнче 1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пулса иртнĕ суйлавсем пĕтĕм тĕнчене çакна татах та татах тепĕр хут кăтартса пачĕç: Совет Правителстви—тĕнчере чи çирĕп правителствă, мĕншĕн тесен вăл пĕтĕм совет халăхĕн ирĕк-кăмăлĕ çине тайанса тăраҫ, унпа никам уйăрайми тачă çыхăннă тата ăна совет халăхĕ вĕçĕмсĕр шанаҫ. Çак суйлавсем фашисăма, правасăрлăхăн, террорăн, етеме курайманлăхăн системине хăватлăн çапни пулчĕç, фашисăм хăй чуралантарнă çĕршывсенче çав системă пулăшнипе çеç тытăнса тăраҫ-ха.

ССР Сойузĕнчи суйлав резулътачĕсем çинчен халăха пĕлтерме фашиссем вилĕмрен хăранă пекех хăрарĕç, мĕншĕн тесен пирĕн халăх декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пĕр шухăшлă тата пĕтĕçÿлĕ пулса пĕтĕм тĕнчене çапла каларĕ: социалисăм çĕршывĕн нимĕнле тăшманĕсем те, нимĕнле троцкисла-бухаринла ирсĕр шпионсемпе диверсантсем те хăватлă совет державине увăн çĕнтерÿлĕ çулĕ çинчен пăрса йама нихăçан та пултараймĕç.

1938 çул коммуниссемпе партире тăманнисен хăватлă сталинла блокне сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйланă чухне çĕнĕрен чаплă çĕнтерÿ кÿрсе пачĕ. РСФС Республикĕнче суйлавсене суйлавçăсен пĕтĕм хисепĕнчен 99,3 процентчĕ хутшăннă, суйлавсене хутшăннă суйлавçăсен пĕтĕм хисепĕнчен 99,3 процентчĕ коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă. Украинă СС Республикĕнче çавăн пекех 99.62 проц. тата 99,5 проц. БССР тăрăх—99,65 проц. тата 99,19 проц. Азербайджанра коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн суйлава хутшăннă пĕтĕм суйлавçăсенчен 99,59 процентчĕ, Казах СС Республикĕнче—99 5 проц., Киргиз СС Республикĕнче—99,1 проц., Узбек СС Республикĕнче--99,57 проц., Туркмен СС Республикĕнче—99,8 проц. сасăланă.

Ытти сойузлă тата автономлă республикăсенче те суйлавçăсен активлăхĕ çав тери пысăк пулнă.

Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлани çакна тата тепĕр хут чаплăн ĕнентерсе пачĕ: „Тĕнчере çавăн пек чăннипех ирĕклĕ, чăннипех демократилĕ суйлавсем нихăçан та пулман-ха, нихăçан та! Истори ун пек примера пĕлмест" (Сталин). Вăл суйлавсем пысăк хастарлăхпа, праçник чухнехи пек лару-тăрура иртнине буржуалă пичетĕн те ирĕксĕрех йышăнма тиврĕ; совет халăхĕн пĕрлĕхне буржуалă пичете паллă турĕ. „Сталин политикишĕн суйлавçăсем 100 процентчĕпех сасăлаççĕ. Совет халăхĕн шухăш-кăмăлĕ праçник чухнехи пек", —çапла çырнă паллă буржуалă хаçат „Нью-Йорк таймс".

ССР Сойузĕн, сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене совет халăхĕ хăйĕн чи лайăх ывăлĕсене—коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсене суйларĕ, пĕтĕм халăхан пĕрремĕш депутатне—Сталин йулташа суйларĕ.

Промышлĕннăçри, транспăртри тата йалхуçалăхĕнчи чи лайăх стаханăвĕçсем, совет интеллигенцин, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн паллă представителĕсем, совет, парти тата хуçалăх ĕçĕнчи дейателсем—акă камсене хушрĕ халăх хамăран аслă тăван çĕршыва тытса тăма. ССРС Верховнăй Совет составĕнче орденоносецсем 40 процент ытла, Совет Сойузĕн Геройĕсем нумай, вĕсем хăйсен хăйулăхĕпе, шиксĕрлĕхĕпе пирĕн тăван çĕршыва мухтава кăларчĕç.

ССРС Верховнăй Совечĕ хăйĕн саккунсем кăларас ĕçне халăхпа тачччăн çыхăнса пурнăçа кĕртсе пыраҫ. Пирĕн çĕршывра влаçăн Верховнăй органăн пĕтĕм ĕçе халăх ырлăхĕшĕн сталинла тăрăшнинче пулаҫ.

ССРС Верховнăй Совечĕ хăйĕн малтанхи икĕ çеççийĕсенче государствăлă чи кирлĕ чылай ыйтусене пĕтĕмпех пĕр шухăшлă пулса татса пачĕ.

Верховнăй Советăн Иккĕмĕш Çеççийĕ йышăннă ССР Сойузĕн 1938 çулти бÿджечĕ доходсемпе расходсен гигантла цифрисенче социалисăмлă государствăн вăйĕпе хăвачĕ малала ÿссе пынине, партипе правителствă халăх ырлăхĕшĕн, унăн савăнăçлă пурнăçĕшĕн ырми-канми тăрăшнине палăртса тăраҫ.

Капиталисăмлă çĕршывсен государствă кивçенĕсем ÿссе пыракан бÿджечĕсем буржуалă економикă

Йулашки 4-мĕш страницăра

Германин Данипе Швецири шпионажĕ

Акли хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх. Дани полицийĕ. Данире йулашки çулсем хушшинче ĕçлесе тăнă нимĕç шпионĕсен пысăк организацийне тытнă. Нимĕç шпионĕсем хăйсен агенчĕсене Балти тинĕсĕн çыранĕ хĕррипче тăракан тинĕсре авиаци базисене вырнаçтарнă. Нимĕç шпионĕсем Данипе Швецире сиктерсе кăларма машинăсем питĕ нумай хатĕрленĕ. Çак машинăсемпе вĕсем тĕнчери вăрçă пуçлансан малтанхи кунсенчех Акли флотне хирĕç усă курма шутланă.

Фашисла заговорщиксем Испанине хăйсен «тамăкла машинĕсене» тĕрĕслесе пĕлмели лабораторри вырăнне туса хучĕç. Германи Испанире хăйĕн туппнсемпе самолючĕсен пахалăхне кăна çеç мар, тата хăйĕн разведкин пахалăхне те тĕрĕслет, тесе çырăççĕ хаçатсем. Германин шпиона агенчĕсем çавăн пекех тата, Балти тинĕсĕ çинчи пур портсене те тенĕ пенех туса пыраç. Çак кунсенче Дани столиинче арĕсленĕ Германи шпионĕсенчен чылайăшĕ, пуривчен ытла Данипе Швеци порчĕсенче ĕçленĕ.

Германин Данири шпиона центрĕн алинче вăрттăн ĕçлекен радиостанцисем çеç мар, тата шпиона свеĕдĕнисем пама вăрттăн шифрсем те пулнă.

Данире шпиона ĕçсене Германин официаллă представителĕсем туса тăнă: Данире арĕсленĕ 14 шпионран вуннăшĕ—Германи гражданĕсем. Вĕсем хушшинче виççĕшĕ—Германи хаçачĕсен официаллă корреспонденчĕсем.

(ТАСС).

Германи Швецине хирĕç тăратнă сĕмсĕр требованисем

Швецире тухакан пур хаçатсем те Швеци пур çĕршыв ĕçсен министрĕ Сандлер Германи правительстви Швецири пур предприятисенчен те йеврейсене кăларса йама хушса тăратнă требованине хирĕç хыттăн тăрса калакă сăмаха пичетлесе кăларăççĕ.

Швеци хаçачĕсем: Сандлер, Германи правительствин сĕмсĕр требованийĕсем çинчен халăха пĕлтерме шут тытнă, тесе çыраççĕ. Швецири пур фирмăсенчен те унта ĕçлекен рабочисемпе служащисен составĕ çинчен Германие тĕплĕ материалсем тăратма ыйтни вăл—економикăлă шпионаж пулса тăрат. „Çак требовани,—тенĕ Сандлер,— Швеци халăхĕн пĕтĕм правалă шухăшĕсене хирĕç пырат“. Тепĕр йенчен, çак требованисем Германи хăйĕн саккунĕсене Швецире те сарма тăни çинчен каласçĕ. Пирĕн патăрта хамăр саккунсем кăна пулма пултараççĕ“.

Пĕтĕм хаçатсем пĕр шухăшлă пулса, Сандлерпа правительстви шухăшĕсен йенче пĕтĕм Швеци халăхĕ тăрат, тесе çыраççĕ.

(ТАСС).

Каталони хулисем çине бомбăсем пăрахни

Еспаньă агентствин Барселонăри корреспонденчĕ Италипе Германи авиацийĕ Испанине хирĕç вăрçă пуçланăран вара 1938 çулта октябĕрĕн 31-мĕшне çитичченхи вăхăт хушшинче Каталони хулисем çине бомбăсем пăрахни çинчен çакăн пек свеĕдĕнисем пĕлтерет. Барселонă çине бомбăсем пăрахса интервентсен авиацийĕ 2.500 çын вĕлернĕ, 3.200 çынна амантнă.Барселонăра пĕтĕмпе 1.200 çурт ишĕлнĕ.

Таррагонă çине пĕтĕмпе 86 хутчен бомбăсем пăрахнă. 383 çурт ишĕлсе аннă (вăл шутра—2 больницă, 5 шкул), вилнисем 207 çын, аманнисем 365. Реус хули çине 57 хутчен бомбăсем пăрахнă. 431 çурт ишĕлтерсе антарнă, 227 çын вĕлернĕ, 381 çын аманнă.

Баламос, Тихальçĕ, Батамона, Гранольĕр, Фиграс хулисем çине те сывлăшран темиçе хут тапаннă. Çак хуласенче пĕтĕмпе 1.100 ытла çурт ишĕлтернĕ, 900 çынна йахăн вĕлернĕ, 1.300 çынна йахăн амантнă.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

** Декабĕрĕн 8-мĕшĕнче Златоустра, Сталин йачĕпе тăракан металлурги савăчĕн „750“ станĕнче пысăк рекорд тунă. Шелайĕн маçтăрăн смени 7 сехет хушшинче 182 тонна хурçă йакатса кăларнă (нормăпа 107 тонна кăлармала).

** Декабĕрĕн 8-мĕшĕнче Челйабинскри фармацевтически савăтăн ампулăсем тăвакан цехне ĕçе йанă. Вăл-хăвачĕ йенчен, пĕрремĕш класла оборудованипе йенчен илсен, çĕнĕ цех Сойузри иккĕмĕш вырăнта тăрат. Унăн çулталăк программи—10 мĕлйун ампула туса кăларасси пулат.

** Вуна пин газогенераторлă машинă. Горькинчи Молотов йачĕпе тăракан автосавăтра вутăпа ĕçлек и газогенераторлă машинăсене массăллăн туса кăларма хатĕрленĕ оборудованисене монтаж тума пуçланă. Килес çул автосавăтăн вуна пин газогенераторлă грузовиксем туса кăлармала.

(ТАСС).

Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн çĕнтерĕвĕ

(Йулашки)

арканса кайасси патне çитнине палăртса тăраççĕ. Фашисла çĕршывсен бйуджечĕсем пĕр тĕллене пăхăнса тăраççĕ, вăл—империалисемла вăрçа, çĕршыв тулашĕнче те, çĕршыв ăшĕнче те фашисла вăрăхурахланассине сарăса пырасси. Фашисла Германире пĕтĕм бйуджетăн иккĕшĕмĕшĕ пайĕ вăрçа хатĕрленессе çĕре кайат. Йапони самурайĕсен бйуджетăн 80 проценчĕ йахăнах вăрçăла авантурăсем тума çĕре расходлаççĕ. Халăха çутта кăларас ĕçе—1,8 процент кăна расходлаççĕ.

Верховнăй Совет çирĕплетнĕ ССР Сойузĕн 1938 çулти бйуджечĕ (унăн доходлă пайĕ 132.6 мĕлйард тенкĕ пулат) — социализмла çĕршыв нихçанхи пек те мар чечекленнине ĕнентерсе парат. ССРС бйуджечĕн чи пысăк пайĕ хуçалăха укçа-тенкĕ парса тăна çĕре (47,2 мĕлйард тенкĕ) тата культура строительствине укçа-тенкĕ парса тăнă çĕре (31,4 мĕлйард тенкĕ) кайат. ССРС Верховнăй Совечĕ оборонăна тĕрекелтме кайакан укçатенкĕне иртнĕ çулта 17.5 мĕлйард тенкĕ пулнă çĕртен 1938ç. 27 мĕлйард тенке çити ÿстерме йышăннине пĕтĕм çĕршыв калама çук пысăккăн камăл туса кĕтсе илчĕ.

ССРС Верховнăй Совечĕ хăйĕн çессийĕсенче чи кирлĕ чылай пе шенисем йышăнчĕ; çĕнĕ халăх комиссариачĕсем туса хурасси çинчен, Сталинла Конституцине килĕшÿлĕн пулса халăх сучĕсене суйласа лартмала тăвакан „Судоустройства çинчен саккун“, „ССРС гражданстви çинчен“ саккун тата ыттисем те.

Халăх суйласа йанă çынсем — ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕсем — хăйсен суйлавçисене çирĕп çыхăну тытаççĕ. Вĕсем вырăнсенчи совет организацийĕн ĕçĕсемпе паллашаççĕ, ĕççынисен халăх бисемпе сĕнĕвĕсене пăхса тухаççĕ, пĕтĕм государствăшăн пысăк вырăн йышăнса тăракан ыйтусем Верховнăй Совет Президиумĕ умне лартаççĕ.

Пирĕн совет избранникĕсем — халăхăн чи лайăх представителĕсем, унăн тарçисем.

ССРС Верховнăй Совечĕ депутачĕн сăнарне Сталин йулташ Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавçисемпе суйлав умĕнхи пухăвĕнче 1937 çулти декабĕрĕн 11-мĕшĕнче каланă хайĕн историллĕ сăмахĕнче сăнласа панă. ССРС Верховнăй Совечĕ депутачĕн хисеплĕ йатне илме халăх тăшманĕсене нимĕн хĕрхенмен çын çеç сыхлăхăла çын çеç, хăйĕн тăвансемпе тата хăйĕн халăхне йурататан çын çеç тивĕçлĕ. Верховнăй Совет депутачĕ Ленин сăнарла политикăлă деятель пулмала Совет халăхĕн çавăн пек депутачĕн образецĕ — пĕтĕм халăх избранникĕ Сталин йулташ пулса тăрат.

* *

Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн чаплă çĕнтерĕвĕ кĕтмен çĕртен пулман. Çав сойуза, блока Совет влаçĕн пĕтĕм 20 çулхи историйĕпе хатĕрленĕ. Вăл большевиксен партийĕ йертсе пынипе пирĕн çĕршывра ĕççынисен социализмăн çĕнтересçишĕн пынă кĕрешÿвĕнче ÿссе тĕрекленсе пынă. Совет влаçĕн çирĕм çулхи асăрăн те аслă историлĕ вĕтĕ тĕ вăл — совет халăхĕн моральлĕполитикăлă пĕрлĕхĕ пулса тăрат, çав пĕрлĕх пирĕн социализмлă обществăн никĕсĕ пулса тăчĕ.

Коммуниссемпе партире тăманнисен никăм çĕнтерейми блокĕн нихçан арканми вăйне тытса тăракан пирĕн Социализмла тăван çĕршывран вимĕвле тăшмансем те — çĕршывризем те, çĕршыв тулашĕнчисем те — хăрушă мар.

М. Рыбаков.

Уполномоченный Чувашглавлита № 561

Химн наукисен кандидачĕ, Карпăв йачĕпе тăракан физико-химически институтăн асăй научнăй сотрудникĕ Е. Н. Гурйанăва Мускавра училĕсен конкурсĕнче научнăй ĕçĕн премин илнĕ. Гурйанăва йулташ — Хусанти хăма çуракан савăтри рабочи маçтăрĕн хĕрĕ. Ăна çак кунсенче ПСК(б)П членĕн кандидатне илнĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Гурйанăва йулташ лабораторинче ĕçлет.
Д. Фавилович фото-ÿкерчĕкĕ.
(Бюро клише ТАСС).

Колхозсенчи хыпарсем

Кантăр акса пысăк тупăш илнĕ

Тамбов облаçĕнчи колхозсем кăçал кантăр акса пысăк тупăш илнĕ. Нижне—Ломовски районĕнчи „Новая жизнь“ йалхуçалăх ертелĕ государствăна планран ытлашши кантăр панăшăн премин шучĕпе 332 пин тенкĕ илнĕ. Çавăн пекех, премин - надбавкă шучĕпе „Новая заря“ тата Димитров йачĕпе тăракан колхозсене те 200 пиншер тенкĕ параççĕ. Кантăр аксе тăвакан колхозсенче ĕçкунĕ çине 3 тенкĕрен пуçласа 7 тенкĕ таран укçан валеçеççĕ.

Колхозник-изобретателсем

Одесса облаçĕнчи „Красный маяк“ колхозра нумай пулмасть Шумский колхозник конструкциленĕ кантăр пухса кĕртмели çĕнĕ универсалла машинăна сăнаса пăхнă. Машинă пĕр вăхăтрах кантăра татса кĕлте туса çыхат. Çакă вăл облаçри колхозникĕсемпе МТС работникĕсен тунă нумай изобретенисенчен пĕри пулса тăрат. Кăçал облаçри çĕрĕç пайĕ колхозникĕсемпе МТС-чи работниксенчен пурĕ 90 изобретение рационализаторла сĕнÿсем илнĕ.

Станицăсенчи васкавлă пулăшу памали пунктсем

Ростов облаçĕнче станицăсемпе йалсенче 20 çĕрте васкавлă пулăшу памали медицина пункчĕсем организациленĕ. Вĕсем пурте оборудованисем, васкавлă пулăшу памали автомашинăсем илнĕ. Вăл пунктсем станицăсемпе хутăрсенчи чирлĕ çынсене кăна мар, уйхир бригадисенче, вылăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен колхозниксене те васкавлă пулăшу параççĕ.

(ТАСС).

Колхоза кĕреççĕ

Йалсенче ССРС Верховнăй Советĕн Иккĕмĕш Çессин тата Чăваш парторганизацийĕн XIX-мĕш конференцийĕн решенийĕсене ÿстселавнă хыççăн, кашни колхозăн йышĕ ÿссех пырат.

Йĕпрес районĕнчи Молотов йачĕпе тăракан колхоза 31 хуçалăх, „Двигатель революции“ колхоза 51 хуçалăх, Литвинов йачĕпе тăракан колхоза 20 хуçалăх, „Победа“ колхоза 63 хуçалăх, „Красный металлист“ колхоза 25 хуçалăх, Димитров йачĕпе тăракан колхоза 15 тата „Красный водник“ колхоза 30 хуçалăх хутшăннă.

С. Малиновский.

** ЙĔТЕРНЕ. Çак кунсенче Какшăмри „Ильич“ колхоза 40 хуçалăх, Чурпайри Кирăв йачĕпе тăракан колхоза 27 хуçалăх, Пырçыланти Ворошилов йачĕпе тăракан колхоза 10 хуçалăх, Мăн Йĕкĕтри „Çĕнĕ звено“ колхоза 10 хуçалăх тата Хучашри „Хĕрлĕ Хучаш“ колхоза 10 хуçалăх кĕнĕ.

М. Рыбаков.

** ВĂРНАР. Карачура йалсоветне кĕрекен колхозсен йышĕ ÿссех пырат. Çак кунсенче Тури Карачурари „Ленин çулĕпе“ колхоза 2 хуçалăх, Тури Кăканарти „Правда“ колхоза 4 хуçалăх тата Анат Кăканарти „Ударник“ колхоза 4 хуçалăх кĕнĕ.

В. Белов.

** СĔНТĔРВĂРРИ. Капканкассинчи „Единство“ колхоз кăçалхи çул пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ. Колхозниксем пуйан та культурлă пурнăçпа пурăнаççĕ. Çакна кура „Единство“ колхозра çĕнĕрен 5 хуçалăх хутшăннă.

В. Иванов.
А. Григорйев.

Комсомолĕçсем перепис çинчен ăнлантараççĕ

Турхапти (Çĕмĕрле р.) „Комбинат“ колхоз çумĕнчи комсомол организацийĕ колхозниксем хушшинче массăлла-политикăлă ĕçе аван туса пырат. Хаçа пур комсомолĕçсем те колхозниксене 1939 çулти халăх перепийĕ çинчен ăнлантараççĕ. Ăнлантару ĕçне туса пыма комсомолĕçсене уйрăм урамсем çумне çирĕплетнĕ.

Комсомолĕçсем 1939 çулшăн хаçат-журнал сарас ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ. И. Мартынăв комсомолĕç пĕччен 200 екземплйар хаçат сарчĕ.

И. Шугайĕв.

Республикăри художĕствăлă пултарулăх кружокĕсен смотăрĕ

Древпромсойуз системине кĕрекен ертелсенчи художĕствăлă пултарулăх кружокĕсен нойабĕр уйăхĕнче пулнă районсенчи смотăрĕ пысăк пахалăхпа иртрĕ. Халĕ халăх пултарулăх искусствин Пĕтĕм Сойузри олимпиадине хатĕрленнĕ май, Чăвашдревпромсойуз президиумĕ йышăннипе декабĕрĕн 17—19-мĕшĕсем хушшинче Шупашкарта Древпромсойуз системине кĕрекен ертелсенчи художĕствăлă пултарулăх кружокĕсен республикăри смотăрĕ пулса иртет. Ку смотăра районсенчи смотăрсенче мала тухнă 13 коллектив хутшăнаççĕ. Çамрăкран: „Хĕрлĕ Çар“ промколхозăн хор кружокĕпе Новинскри катка-пичке савăтĕнчи хĕлĕхле оркестр (Сĕнтĕрвăрри районĕ), Çĕмĕрле хулинчи „Труженик“ ертелĕн хор кружокĕ, духовой оркестрĕ тата драмкружокĕ. Йанăмри „Çĕнĕ пурнăç“ колхозăн хĕлĕх инструменчĕсен оркестрĕ (Тутаркас районĕ), „Тиуш“ ертелĕн драмкружокĕ, Сыпайкассинчи „Клевĕр“ промколхозăн йурă ансамблĕ (Ишлей районĕ). Вăрнар районĕнчи „Труд“ ертелĕн хĕлĕхле ансамблĕ тата ыт. те пулаççĕ.

Республикăри смотăра хатĕрленнес тĕллешпе ертелсенчи кружоксене практикăлă пулăшу пама Древпромсойуз декабĕрĕн 9-мĕшĕнче те хăйĕн инструкторĕсемпе культорганизаторĕсене, пĕтĕмпе 6 çын, районсене кăларса йачĕ.

Художĕствăлă пултарулăх кружокĕсен смотăрне иртерни йышлăн шутланакан драмă, музыкă, хор кружокĕсен тата уйрăм йурăçсен пе ташăçсен творчествăлă пултарулăхне ÿстерес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăмалла.

Харпăрхăй пултарулăх искусствине тата халăх творчествине аталăх кăтартса паракан кружоксене, уйрăм исполнителĕсене премилеме Чăвашдревпромсойуз президиумĕ 10000 тенкĕ укçа уйăрса хунă.

Ф. Ландышĕв, Н. Амурцĕв.

Ворошилăвла йуланутçăсен кружокĕ

ШĂХАСАН Çĕнĕ Мами йалсоветне кĕрекен „Хĕрлĕ партизан“ колхозри Осоавиахим организацийĕ массăлла оборона ĕçĕсене вĕреннесине лайăх организациленĕ.

Колхоз председателĕ, вăлах Осоавиахим организацин председателĕ В. А. Алексейĕв йулташ пуçарнипе кăçал колхозра ворошиловла йуланутçăсен кружокĕ ус-нă. Кружокра тăракан вунă член кавалери ĕçне вĕренеççĕ. Çак пи-тех те паха спорт ĕçне вĕренме колхоз пилĕк лаша уйăрса панă.

Занятисем план тăрăх, ернере виçĕ хут пулса иртеççĕ. Халĕ вĕреннипе норма тăрăх лашасемпе сиксе касма вĕренеççĕ. Кун хыççăн (иккĕмĕш норма тăрăх) икĕ айăкпине шахмăтла йĕркепе лартса тухнă çапçасене касса тухма вĕренме тытăнаççĕ.

Нумайăх та пулмасть организаçи çерлехи маневр иртернĕ. Маневра çуранниксем те, лашаллисем те тухнă. Маневр анăçлă иртнĕ.

Колхозри Осоавиахим членĕсен çакăн пек паха пуçарăвĕсене пур майсемпе те пулăшса пымалла.

Г. Григорйĕв.

Утар пысăк тупăш панă

ЙĔТЕРНЕ Тури-Ачакри „Крестьянская газета“ колхоз хуртхăмăр утарĕ организациленĕ сакăр çул çитрĕ. Çак хушăра утар чылай ÿссе пысăк çитĕнсе тунă.

1937 çулта 54 çемйе хурт-хăмăр пулнă, 1938 çулта 95 çемйене çитнĕ.

Утар ĕçне лайăх йĕркеленĕ пирки колхоз çулсерен пысăк тупăш илет. Кăçал вăтам шутпа кашни çемйерен 21 килограм пыл илнĕ. Çапла колхоз кăçал пĕр хурт-хăмăр утарĕнчен кăна 11 пин тенкĕлĕх тупăш илнĕ.

Ник. Цветков.

Прозаиксен пухăвĕ

Декабĕрĕн 10-мĕшĕнче прозăпа çыракан чăваш писателĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта прозаиксен çекцине организацилерĕç. Ĕç планне социализмлă реализм, вырăссен аслă писателĕ И. С. Тургенĕв творчествин çинчен ыйтусем тăрăççĕ. Çавнашкалах, çекцире чăваш писателĕсен: Елкер, Тухташ, Йăнкас, Иван Мучи тата Пайраш творчествисем çинчен сÿтсе-йавмала.

Çекци уйăхра икĕ хут пухăнат. Çекци ларăвĕсем творчествăлă йулташлăхпа пулса иртмеле.

Вĕренÿре малта пыраççĕ

Кăшавăшри (Ишлей районĕ) районри колхоз шкулĕнче вĕренекенсенчен чи активлă çамрăксем 6 çын комсомол ретне кĕчĕç. Вĕсем вĕренÿре малта ретре пыраççĕ. ПСÇЛКС программине усташе вĕренес тата хăйсен политикăлă пĕлĕвĕсене хăпартас тĕллешпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Çамрăк комсомолĕçсем хаçа пурте оборона значокĕсене илме хатĕрленеççĕ.

М. Галкинă.

Çĕрпÿри фельдшĕрсен шкулĕнче вĕренекенсенчен çак кунсенче 17 студент комсомол ретне кĕчĕç. Комсомола кĕме хатĕрленекен студентсем татах та пур. Вĕсем ПСÇЛКС программине уставне вĕренеççĕ.

В. Абликăв.

Лайăх ĕçленĕшĕн

Вăрнар районĕнчи çулсĕр пайĕ кăçалхи çул çулĕсĕр строительстви планне срукчен тата ытлашшипех тултарнă Анаткас Хапăс тата Турхан колхозсенчи çулĕсĕр бригадирĕсене Кирилл Кузнецовпа Дмитрий Кузьмина кашниех 100-шер тенкĕ премин пачĕ.

Çакăн пекех Турхапти Ленин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем те кĕпер тунă çĕрте тăрăшса ĕçленĕшĕн 500 тенкĕ премин илчĕç.

Н. Козлов.

Фашисла погромщиксене хирĕç митинг

Декабĕрĕн 3-мĕшĕнче Вăрмар посолокĕнчи вăтам шкулта вĕренекенсем вĕрентекенсем фашисла Германире йеврейсене погромсем туннне хирĕçлесе митинг туса иртерчĕ.

Митингра тухса калакансем пурте йеврейсене хирĕç погромсем туса çылăхсăр шыракан çынвĕлеренсене чĕререн тарахса сивлерĕç.

В. Алендейĕв.

Тырпула çĕртеççĕ

Вутланти (Трак р.) „Комбайн“ колхозра итем çинчи тырпула çапса пуçтарса кĕртме васкамаççĕ. Иккĕмĕше виççĕмĕш бригадăсен ырашкĕрхи тула, клевĕр тата ытти культурăсене те çапса пĕтерммен. Вĕсем капансенчех лараççĕ, çĕрме тытăннă.

Ку çеç те мар-ха. Итемсем çинчи уламсемпе арпасене пуçтарса тирпейлемен. Вĕсем çаплах сапаланса выртаççĕ, çĕреççĕ. Çĕрсе йурăхсăра тухнă арпасене сыхмана тăктараççĕ. Колхоз председателĕ Игоряăв тата правлени членĕсем итем çинчи тырпулсене тăккаламасăр пуçтарса кĕртессишĕн, вылăх апачĕсене тирпейлĕ тытассишĕн тăрăшмаççĕ.

„Комбайн“ колхозра ку вăхăтчен те аван çапса пĕтеремени, утă капансем çĕрни правлени членĕсемпе бригадирсем тата колхозниксем хушшинче дисциплинă çуккине кăтартса парат. Бригадирсен колхозниксен ĕçкунĕсене тĕрĕс шутласа ĕçкунĕсене çине çырса парасси çине çилĕлтен пăхаççĕ. Хăшпĕр бригадăсенче ĕçкунĕсене 3—4 уйăх ĕнтĕ ĕçкунĕсене çине лартса паман.

Райçĕрĕç пайĕнче „Комбайн“ колхозри çитменлĕхсене лайăх пĕлсе тăраççĕ пулсан та, çав çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтересçишĕн тăрăшмаççĕ, колхоза пулăшса пымаççĕ.

Колхозниксем

А. А. Акопйан—техникăлă наукăсен кандидачĕ, Совегсен Дворецне аса-çисĕмрен хÿтлемели пройект автăрĕ. Вăл Н. П. Бейаковпа пĕрле „Защита всевозможных строений от молнии“ йатлă научнăй ĕç çырат.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: А. А. Акопйан катодлă осциллограф çинче ĕçлет.
А. Межуйĕв фото-ÿкерчĕкĕ.
(Пресклише).

Спорт хыпарĕсем

** Кăçал Чăваш республикĕнчи „Спартак“ спорт обчĕстви хоккей командисем ССРС кубокĕшĕн пулакан ăмăртăва хутшăнаççĕ. Вăл ăмăртăва пирĕн хоккенсем Горький хулинчи, Мускав, Горький, Иванова, Рйазань, Тула облаçĕсенчи тата Тутар, Удмурт, Мордва, Мари республикĕсенчи хоккеисемпе пĕрле хутшăнаççĕ.

** Кăçал декабĕр уйăхĕнче „Спартак“ обчĕстви граната ывăтакансен ăмăртăвĕсене туса иртерет. Вăл ăмăртусем: Кÿкеçре, Улатăрта, Канашра, Йĕпресре, Сĕнтĕрвăррииче, Чакаларта (Ишлей р.), Енĕшкассинче (Трак р.) пулса иртмеле.

Тÿрлетни

Пулă тытас ĕçсем пирки Йапоние калаçнисем çинчен панă ТАСС пĕлтерĕвĕнче (вăл пирĕн хаçатра декабĕрĕн 10-мĕшĕнче тухнă.—Ред.) йанăш кайнă вырăн пур. Пĕрремĕш абзаира „кăçалхи нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче“ тенине „нойабĕрĕн 28-мĕшĕнче“ тесе вуламала.

(ТАСС).

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çуртĕнче

Ыран, декабĕрĕн 13-мĕшĕнче, ПСК(б)П Обкомĕн парти вĕрентĕвĕн тĕп çуртĕнче, парти историне вĕренекенсене пулăшма „Диалектический материализм—мировоззрение марксистско-ленинской партии“ темăпа лекци пулса иртет.

Лекци каçхине 7 сехетре пуçланат.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

„Резинособытан“ Чăваш уйрăмĕ

катăртнă хак тăрăх кивĕ авторезинăсене хатĕрлет.

АВТОМАШИНĂ ТЫТАКАНСЕМ!

Кивĕ покрышкăсемпе камĕрăсене „Резинособытан“ склачĕсене парăр. Склавсем Шупашкарта Ленин урамĕпе Хĕрлĕ йалйул кĕтессинче 2/3 номерлĕ суртра тата Горький урамĕнчи 12 номерлĕ суртра.

„Резинособытан“ Чăваш уйрăмĕ.

ПСК(б)П ЧĂВАШ ОБКОМĔН УЙĂХРА ПĔРРЕ ТУХСА ТĂРАКАН

„ĔÇХĔРАРĂМĔ“

журнала пурте 1939 çулшăн ÇЫРĂНСА ИЛМЕ ВАСКĂР

ЖУРНАЛ ХАКĔ:

12 уйăха—6 тен. | 3 уйăха—1 т. 50 п.
6 „ 3 „ | 1 „ 50 „

„Ĕçхĕрарăмĕ“ журнал редакцийĕ.

Чăваш Аптекоуправленин

Канашри тĕп аптека складне йаланлăхах ĕçлеме кирлĕ:

секретар-машинисткă, калькулйатăр-счетовод, сторож-охранник, фасофщиксем

АДРЕС. г. Канаш, Базарная площадь, контора склада. Телефон № 66.

Администраци.

2—2

ЧĂВАШ АССР СЫВЛĂХА СЫХЛАС ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔ

ДЕЗИНФЕКТĂРСЕН

ВИÇĔ УЙĂХЛĂХ КУРСНЕ ОРГАНИЗАЦИЛЕТ

Занятисем çак çулти декабĕрĕн 19-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Курса арçынсемпе хĕрарăмсене те, 6 çултан сахал мар вĕреннисене, районсенчен тата хула сывлăх пайĕсен командировкисем тăрăх çеç илеççĕ. Курсантсене стипендипе хватер укçи 90 тенкĕ параççĕ.

Заявленисене ЧАССР Сывлăха сыхлас Халăх Комиссариачĕн медицина образовани пайне памала.

3—3

Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР., заказ № 881 ф. б. 58×84 п. л.